К 84.09(=Чув)
Е91
Ч-40131



ГЕОРГИЙ
ЕФИМОВ

# Акăшпи



Национальная библиотека ЧР
4-040131

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К Ф
Ч84.09(=Чув)
Е91

ГЕОРГИЙ ЕФИМОВ

# Акәшпи

Чăваш АССР
Государство Издательстви
Шупашкар 1960

ДАРСТВЕН[illegible] ЭКЗ.

Ч-40131

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ПРОВЕРЕНО
2010



# ТИМӖРПЕ ЫЛТТӐН

*(Ю м а х)*

Тахҫан, ӗлӗк-авалах
Сӗве кӗнӗ Атӑла.
Сар хӗвел те тӳпере
Ӑшӑтса тӑнӑ ҫӗре.
Хӗвел аннӑ. Уйӑх тухнӑ,—
Хӑй тавра ҫӑлтӑрсем пухнӑ.
Пурнӑҫ пынӑ ерипен
Ҫутҫанталӑк йӗркипе.

Хале эпе астумастăп,
Пат татсах та калаймастăп:
Хăш кунне, хăш эрнере,
Шăрăхра е сивĕре —
Тимĕрпе йăлтăркка ылттăн
Калаçма пуçланă хыттăн.
Калаçăççĕ, калаçăççĕ,
Кайран тавлашсах каяççĕ.
— Пылчăкпа тусан кăна
Хупласа тăрать сана.
Кама кирлĕ эс, кала,
Санпала мĕн тумалла?—
Ылттăн тимĕртен кулать,
Хĕвелпе хăй йăлтăрать.
— Сăнăм пултăр-и хура,
Эп санпа танах вара.
Тĕресне калас пулсан,
Эпĕ çирĕпрех санран.
— Çирĕпрех?.. Тата мĕн калăн?
Тен, эс вăюпа мухтанăн?—
Ылттăн йĕкĕлтет ăна,
Хăй çунса тăрать кăна.
— Мухтанассăм çук пĕрре те,
Хамăн тивĕçе пĕлетĕп...
Тен, каятчĕç тытăçсах.
Анчах çавă самантра
Ларнă, тет, пит çывăхра
Пĕр хастар хресчен канса.
Вăл илтет те шăв-шава
Çывăха пырса тăрать.
— Татса пар тавлашăва!—
Ылттăнĕ çынран ыйтать.
— Çăмăл мар та, çав-çавах
Татăп çак тавлашăва.
Иксĕр утăр ман хыçран,
Йăлтах тăвăр эп хушсан.

Ак хресчен киле каять:
Ылттăнран та, тимĕртен те
Ķĕреçе туса хурать.
— Ķилĕшсен-килĕшмесен те,
Тавĕ таталтăр тесен,
Иртме çук эп хушнинчен.
Эп паратăп ик йăран,
Чавăр вĕсене паян.

Ак пуçлаççĕ ĕçлеме,
Çереме хĕрсех хирме.
Тимĕр кĕреçе чават,
Чавнă майăн йăл кулать.
Сăнĕ унăн çуталать,
Ĕçĕ те ăнса пырать.
Ылттăн кĕреçи чунтан
Ахлатать те эхлетет.
Авăнать унтан-кунтан,
Çереме аран илет.
Пичĕ тăрăх тар юхать,
Тар çине тусан ларать.
Ĕç каймасть-çке, иçмасса,
Йăлт пĕтет асапланса.

Анчах тимĕр кĕреçе
Тĕплĕ тунă çак ĕçе.

Ķаç енне хресчен килет,
Ķĕреçесене илет.
Нихăшне те мухтамасть,
Нихăшне те хурламасть.

Тепĕр кун вара хресчен,
Шурăмпуç çути килсен,
Çарана тухса утать.
Ылттăнран та, тимĕртен те
Вăл çава туса хурать.
— Ķилĕшсен-килĕшмесен те

Хушнине тăвас пулать.
Çирĕн утă çулмалла.

Хайхисем çулма пуçлаççĕ,
Пур вăйран сулса яраççĕ.
— Чăввăшт,— тет тимĕр çава,
Ĕç ăннишĕн вăл хавас.
Ун паккусĕ сарлака!
Çӳлĕ ӳснĕ куракка
Хырнă пек çулса пырать,
Çивĕччĕш йăл-йăлтăрать.
Ĕç ăнмасть ылттăн çаван,
Вăл сывлать аран-аран.
Çивĕччĕш касмасть, аптрать,
Куракпа тек чăлханать.
Ыванать те, тарăхса
Вăл выртать ярт тăсăлса.
Вара тимĕр çавана
Пĕр-пĕччен, яра-куна,
Çулма лекнĕ çарана.

Кас пулсан хресчен килет
Икĕ çавана илет.
Нихăшне те мухтамасть,
Нихăшне те хурламасть.
Хайсем туйччăр хăйсенне,
Вара татĕç тин тавне.

Тепĕр кун каллех хресчен,
Хĕвелтухăç хĕрелсен,
Хирелле тухса утать.
Ылттăнран та, тимĕртен те
Вăл çурла туса хурать.
— Килĕшсен-килĕшмесен те
Хушнине тăвас пулать.
Сирĕн тырă вырмалла.
Тытăнаççĕ кĕç вырма,
Вăхăт çуккă калаçма.

Тăрăшать тимĕр çурла,
Қăчăрт-кăчăрт! тет, юрлать.
Қĕлтисем хăвăрт тулаççĕ,
Тĕм пулса хыçра юлаççĕ.
Ылттăн çурли çеç хыçра
Ним тума та аптăрать.
Шăлĕсем ун мăкалаççĕ,
Авăнаççĕ, хуçăлаççĕ.
Ним тума та çук пуль çав:
Хресчене кӳренчĕ ылттăн,
Пулчĕ çавракa укçа,
Çулпала кустарчĕ хыттăн.

Вăл çитет улпут патне,
Савăнсах илет улпучĕ.
Хăй ятлать тек хресчене:
— Ылттăн пулмĕ сан, çĕр хурчĕ.

Тăрăшать, ĕçлет хресчен,
Пилĕкне авать куллен.
Телей çук çавах ăна,
Хурлăхпа нуша кăна.
Тарăхса каять хресчен,
Ак хайхи леш тимĕртен
Çав улпут пуçне çурма
Вăл тăвать хаяр чукмар.

Вăхăчĕ нумай иртет-и,
Çу килет-и, хĕл çитет-и,
Ăна эпĕ сăнаман,
Тимĕртен тунă чукмар
Аркатать çеç чăл та пар
Леш усал улпут пуçне,
Хăвармасть ятне-шывне.

Çав кунран вара хресчен
Лашт! ярать, тет, сывласа.
Пурлăхĕ ӳсет куллен,

Пурнăçĕ пырать ăнса.
Тимĕрпеле ылттăн та
Халь пит туслă, тупата.

* *
*

Халăхран мĕн илтнине
Çырса хутăм хут çине.
Тусăмсем илтмен пулсан,
Вулĕç ĕçрен пушансан.





# КУÇЛĂ ÇĔРĔ

*(Ю м а х)*

Юмах юпах тихапа,
Халлап хăла лашапа
Пынă чухне юртăпа
Чĕлпĕртен эп ярса илтĕм,
Киле çавăтрăм та килтĕм.
Вара юпах тихине
Эп кăкартăм юпаран,
Хăла-хăла лащине
Кĕртсе ятăм хапхаран.

Сума суса юмахне
Лартрăм юпа тăррине,
Ырă курма халлапне
Лартрăм хапха тăррине.
Юмах — юпа тăрринче,
Халлап — хапха тăрринче.

Пурăннă, тет, çĕр пӳртре
Пĕр хĕрарăм ывлĕпе.
Тар юхтарнă, тет, ĕçре
Кунĕп-çĕрĕн, лаша пек.
Çав-çавах ун çӳпçере
Пĕрчĕ çăнăх та пулман.
Çур çулта пĕрре аран
Татăк çăкăр çисе курнă,
Питĕ йывăр пулнă пурнăç.

Ывăлĕ çакна курать,
Шутлама вара пуçлать:
«Йывăр, йывăр аннене
Тăрантмашкăн ывăлне.
Çул та ман çитсе пырать,
Ĕçе кĕрĕшме юрать.
Тен, кăшт пурнăç лайăхланĕ,
Ват аннен шăмшакĕ канĕ».
Амăшпе вăл калаçать,
Вара кĕрĕшет тарçа.
(Чимĕр-ха, кĕçех манман,
Ывлĕн ячĕ пур — Иван.)

Тарçăра Иван ĕçленĕ,
Ĕçпеле вăл сӳлтĕркенĕ.
Çавах пурнăçĕ ăнман,
Амăш канăç курайман.
Юмах тăрăх эп пĕлетĕп:
Пĕр çулталăк ĕçлесе те
Виçĕ пус аран-аран
Иван илнĕ хуçаран.

«Телей пур-тăр тĕнчере,—
Шухăша каять пĕрре.—
Сывлăх тĕрĕс-тĕкел чух,
Эп нимскер çухатас çук,
Шыраса пăхам ăна,
Тен, тĕл пулăп шăп кăна».
Амăшпе сывпуллашать,
Виçĕ пус укçа илет,
Вăл вара тухса утать
Куçĕ курнă çĕрелле.

Ак иртет пĕр кун, ик кун,
Умри çулĕ вăрăм ун,
Курăк пуснă çулпала
Кĕрет палламан яла.
Хырăмĕ çавтер ун выçă.
Шухăшлать: «Вăрăм çул хыççăн,
Апатланăп эп кунта,
Выртса канăп-ха кăштах...»
Анчах çавă самантра
Иван акă мĕн курать:
Урам тăрăх кăшкăрса,
Ват йытта хăваласа
Пĕр кĕтӳ ача чупать,
Чупнă май чул ывăтать.
Чул лекет те, питĕ хытă
Йынăшса ярать ват йытă.
Пит шеллет Иван йытта,
Ачасем патне пырса,
Тилмĕрсе те йăлăнса,
Чарăнмашкăн вăл ыйтать.
Ачисем-мĕн итлемеççĕ,
Çав-çавах чулпа переççĕ.
Тӳсеймест вара Иван,
Вĕсене калать чунтан:
— Йытта сутăр пĕр пусла,
Тултарсамăр кăмăла.

Ачасем час килĕшеççĕ:
— Илсе кайăр эппин,— теççĕ.

Уттарать вăл малалла,
Пырать йытă унпала.
Ак пырсан-пырсан, мĕн тейĕр,
Йытă чĕнчĕ этем евĕр:
— Эс хăтартăн вилĕмрен,
Пурнăç патăн çĕнĕрен.
Тав тума сана паян
Ним те çук ман, ху куран.
Ирĕк пар пĕрле пыма,
Çул çинче юлташ пулма.
Вăхăт çитĕ, тен, чăнах
Кирлĕ пулăп эп сана.

Иккĕшĕ сăмах татаççĕ,
Килĕшеççĕ те утаççĕ.
Çичĕ хир урлă каçсан,
Ял каять ак курăнса.
Шухăшлать вара Иван:
«Выçă тухмăп ку ялтан,
Çăкăр илĕп пĕр пуса,
Çийĕп икĕ пай туса».
Анчах çавă самантра
Иван акă мĕн курать:
Михĕ йатнă ачасем
Шыв хĕрне чупса анаççĕ.
«Халь шыва перер», тесе
Çуйăхаççĕ, тавлашаççĕ.
— Михĕре мĕскер вара?
Ачасем, каламăра?
— Ват кушак ларать унта,—
Пĕри чĕнчĕ ушкăнтан,—
Миххе пысăк чул хуратпăр,
Шывалла вăшт ывăтатпăр.

Кушака Иван шеллет:
— Пĕр пус парăп эп сире,

Ăна сутăр мана,— тет,—
Ķушак юлтăр ирĕкре.
Ачасем час килĕшеççĕ:
— Ķăмăлу пулсан, ил,— теççĕ.

Ку ялтан та выçăллах
Уттарать вăл малалла.
Йытăпа кушак пыраççĕ,
Унран утăм та юлмаççĕ.
Ялĕ курăнми пулсан,
Ķушак ыйтрĕ Иванран:
— Санпала пыма юрать-и?.
Эп ťаçта çитме те хатĕр
Пурнăç панă çынпала.
Ķун-çулра тем те пулать,
Вăхăт çитĕ, тен, чăнах
Ķирлĕ пулăп эп сана.

Виççĕш нумайччен утаççĕ,
Çичĕ хир урлă каçаççĕ.
Пĕр хĕвеллĕ ирхине
Тухрĕç улăхваррине.
Улăхра кĕтӳ çӳрет,
Хура вăкăр мĕкĕрет.
Ак Иван курах каять,
Ķĕтӳç темĕн хăвалать.
Шăп Иван тĕлне çитсен,
Патакне çӳле çĕклерĕ,
Çул çинче выртать çĕлен,
Патак лекĕ те — вĕлерĕ.
— Çĕлене ма хăвалан?—
Ķĕтӳçрен ыйтать Иван.
— Вĕлересшĕн эп ăна,—
Тет кĕтӳçĕ Ивана.

Çĕлене Иван шеллет:
— Ăна сут эс мана,— тет,—

Пĕр пус парăп эп сана,
Çĕлен кайтăр вăрмана.
Кĕтӳçи час килĕшет:
— Маншăн мĕн, ил ара,— тет.

Халь Иванпала пĕрле
Йытăпа кушак, çĕлен
Кайтараççĕ малалла
Улăхпа — вăрманалла.
Вăрмана çитес чухне
Ивана çĕлен чĕнет:
— Эсĕ çăлтăн вилĕмрен,
Тав тăватăп чĕререн.
Анчах мĕн тăвас-ха манăн
Саншăн, ырă çăлаканăм?
Тĕнче тăрăх санпала
Тухаймастăп эп çула,
Хырăмпа шуса пыма
Мана пĕртте çăмăл мар.
Ах, асилтĕм, тăхтасам,
Ман хыçран пыр, ан юлсам.
Уттарар атте патне,
Илер куçлă çĕррине.
Куçлă çĕрĕ пур чухне
Эс аптрамăн ĕмĕрне.
Шутласа кăна эс хур:
Сан умра кирли йăлт пур!
Ман атте çĕлен патши,
Шăхăрать вăл ши те ши,
Хӳрипе çĕре çапать,
Тăвăл тухнăн туйăнать.
Çавăнпа, илсен çĕрре,
Лăпчăнса вырт эс çĕре.
Унсăр чĕрĕ те юлаймăн,
Çĕрĕ те санра пулаймĕ.

Ак çĕлен шума пуçлать,
Хыçалта Иван пырать,

Кушакпа йытти вара
Иванпа юнашарах.
Чӑтлӑха вӗсем тухаҫҫӗ,
Умра шӑтӑк пур, кураҫҫӗ.
— Ҫакӑ шӑтӑк умӗнче
Кӗтсе тӑр эп тухиччен.
Эп каланине, Иван,
Ан кӑлар эс асӑнтан,—
Тет ҫӗлен ҫӑлаканне
Кӗнӗ чух шӑтӑк ӑшне.

Виҫҫӗн шӑтӑк умӗнче
Кӗтсе ларчӗҫ темӗнччен.

Ак ҫӗлен шуса тухать,
Ивана ҫӗрре парать,
Ҫӗрре илчӗ те тӳрех
Лӑпчӑнса выртрӗ ҫӗре.
Ахӑрса каять вӑрман,
Кун пекки нихҫан пулман:
Ҫӗр ҫул ӳснӗ йывӑҫсем
Хулӑ евӗр авӑнаҫҫӗ,
Тӑхлан тӗслӗ пӗлӗтсем
Ҫумӑр ҫутарма пуҫлаҫҫӗ.
Ҫиҫӗм вӗҫӗмсӗр ҫиҫет,
Аҫлати кӗр-кӗр кӗрлет.
Таҫта вут хыпса илет,
Иван ҫинеллех килет.
Хускалмасӑр вырӑнтан
Ҫаплипех выртать Иван.
Ак тем хытӑ кӗрӗслетрӗ,
Ҫӗре ҫичӗ хут чӗтретрӗ.
(Ҫухрӑм тӑршшӗ хӳрипе
Ҫӗре ҫапнӑ ҫавӑн пек
Хай ҫӗлен-патша.)

Вара
Вӑйлӑ тӑвӑл чарӑнать.
Иван выртнӑ чӑтлӑхра
Кайӑк юрӑ пуҫарать.

Çутçанталăк лăплансан,
Çĕр çинчен тăрать Иван.
Çаврăнса пăхмасăр халь
Уттарать вăл улăха.
«Симĕс курăк ӳснĕ çӳлĕ,
Тен, выртса канма та пулĕ?
Анчах хырăм выçă ман,
Вăйăм та ĕнтĕ юлман.
Ăша ярăттăм тĕпренчĕк,
Анчах пушă-çке ман енчĕк»,—
Хурланса шутлать Иван...

Самантрах умма таçтан
Пĕр сĕтел тухса ларать.
Ун çинче ĕçме-çиме
Пĕртте татăлма пĕлмест,
Тутлă шăршлăн пăсланать,
Кăмăл пур-тăк — çи кăна.

Сĕтел хушшине ларaççĕ,
Виççĕш те çиме пуçлaççĕ.
Мăрлатать кăна кушак
Çинĕ майăн аш-пăша,
Йытти савăннă енне
Вылятать çеç хӳрине.
Кĕç çисе те тăранaççĕ,
Улăха канма выртaççĕ.
Кăшт кансассăн, вăй пухсан,
Килелле утать Иван.

Юмахра, пĕлетĕр пулĕ,
Кĕскелет-çке çынсен çулĕ.
Хăйĕн амăшĕ патне
Иван çитрĕ çав куннех.
Амăш ывăлне курсассăн,
Ыталать чунтан хавассăн.
Чухăн таврăннă пулсан та,
Ӳпкелешмĕ нихăçан та.

Тăван ывăл çумра пултăр,
Амăшне пăхса йăл култăр,
Вара юрлă пурнăçра та
Хуна çăмăллăн туятăн.
Çуккине те çурмалла
Иккĕшĕн пайламалла.
Пурлă-çуклă апатне
Ак лартать сĕтел çине,
Ывăл килнĕ ятпала
Кăшт хăна-çке тумалла.
Куçлă çĕрĕ пуррине
Каламасть вăл амăшне.

Қаç пулсан, уйăх тухсан,
Амăш çывăрса кайсан,
Иван шутлама пуçлать,
Вара татăклăн калать:
— Çак çĕрпӳртĕн вырăнне
Ӳссе лартăр ир енне
Ылттăнран та кĕмĕлтен
Халиччен курман кермен.
Тавралла ешертĕр сад:
Унта юрă юрласа
Вĕçчĕр тĕрлĕ кайăксем,
Улмине аран йăтса
Ларччăр çеç улмуççисем.

Вăл вара куçне хупать,
Тутлăн çывăрса каять.

Ирех амăш вăранать,
Вара акă мĕн курать:
Ылттăнран та кĕмĕлтен
Ялтăрса ларать кермен.
Тавралла ем-ешĕл сад,
Унта юрă юрласа
Савăнаççĕ кайăксем,
Улмине аран йăтса,
Ав, лараç улмуççисем.



НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-40131

Пӳлӗмре, сӗтел ҫинче,
Апат-ҫимӗҫ пӑсланать.
Тӗлӗнет хӑй: «Эй, тӗнче!
Курасса шанман кӑна.
Ҫеп-ҫемҫе тӳшек айра,
Хытӑ сак ӑҫта вара?»
Ывӑлне чӗнсе илет,
Тӗпӗ-йӗрӗпе тӗпчет.
Мӗн пулни-иртни ҫинчен
Калать ывӑлӗ темччен.
Ҫӑвӑнаҫҫӗ, шӑлӑнаҫҫӗ,
Апата вӗсем лараҫҫӗ.
Кун иртет те ҫӗр килет,
Ҫӗр иртсессӗн ир ҫитет.
Пурӑнаҫҫӗ савӑнса,
Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса.
Мӗн шутланӑ, пӗтӗмпех
Пулса пынӑ йӗркипе.

Тӑхтӑр, сывлӑш ҫавӑрам,
Кӑшт сире те кантарам.
Пухнӑ хыҫҫӑн вӑй-хала
Эпӗ калӑп малалла.

Вӑхӑт иртнӗ, вӑхӑт шунӑ,
Вӑхӑт хӑйӗннех-ҫке тунӑ.
Иван каччӑ пулса ҫитнӗ,
Янаха сухал та витнӗ.
Пынӑ амӑш ватӑлсах,
Вӑй та пынӑ тайӑлсах.
Пуҫтарма килтӗрӗшне
Йывӑр килнӗ амӑшне.
Ҫавӑнпа шутлать Иван:
«Начар пулмӗ авлансан».
Амӑшне калать вӑл:—Сан ӗҫ
Чӑннипех те пит нумай.
Кин кӗртсессӗн тупӑн канӑҫ,
Эп шутлатӑп авланма.

Амăш савăнса ӳкет:
— Хĕрне час тупсамччĕ,— тет.
Иван капăр тумланать,
Хĕр тупма тухса каять.

Юмахра, пĕлетĕр пулĕ,
Кĕскелет-çке çынсен çулĕ.

Пĕр хĕвеллĕ ирхине
Вăл çитет патша патне.
Патша шӳтшĕн йышăнать,
Чухăн ывлĕ Ивана.
Шикленсе ӳкмест Иван,
Патшана калать куçран:
— Сан хĕре эп çураçма
Килтĕм питĕ инçетрен...
Патшана çапла сăмах
Тарăхтарчĕ чĕререн.
Алра хĕç пулас пулсан,
Ивана вăл çурмаран
Каснă пулĕччĕ тӳрех,
Чикнĕ пулĕччĕ çĕре.
Анчах çавă вăхăтра
Пĕр тарçи пырса тăрать
Йăпшăнса патша çумне,
Пĕшкĕнет хăлхи патне.
Тем калать пăшăлтатса,
Тутăрпа тарне шăлса.
Патша йăл кула пуçлать,
Ивана ларма хушать,
Вара сăмахне пуçлать:
— Çичĕ тинĕс леш енче,
Тап-таса хир варринче
Лапсака та питĕ йăрăс
Ӳсет кĕмĕл йĕплĕ чăрăш.
Ыранччен ман пахчана
Эс килсе лартсан ăна,
Сана парăп хам хĕре...

Тепĕр ирхине ирех
Çывăрса тăрать патша.
Мĕн курать вăл, тамаша!
Лапсака та питĕ йăрăс
Кĕмĕл йĕплĕ капăр чăрăш
Пахчара ларать иккен
Хумханса çилпе хуллен.

Патша хытă тарăхать,
Çамкине пĕрсе шутлать.
Хĕр памашкăн чухăна
Намăс пек çак патшана.
Ивана чĕнме хушать,
Вăл кĕрсен çапла калать:
— Чăрăш манăн пахчара,
Тав тăватăп маттура.
Халĕ эс ыран ирччен
Куçăма эп уçиччен,
Манăн кантăк умĕнче
Кĕленче кермен лартсан,
Манăн хĕрĕм — пулĕ сан.
Ирех тепĕр ирхине
Патша уçнă та куçне
Пăхнă кантăкĕ умне.
Хĕвелпе йăл-йăлтăрса
Кермен ларнă çуталса.

Патша хытă тарăхать,
Çамкине пĕрсе шутлать.
Хĕр памашкăн чухăна
Намăс пек-çке патшана.
Ивана чĕнме хушать,
Вăл кĕрсен, çапла калать:
— Кермен тунăшăн мухтав!
Сана ĕç хушап тата.
Хĕрĕме пама та пулĕ,
Анчах пĕр-пĕрин патне
Çӳремешкĕн çук-çке çулĕ.

Çул тусамччĕ ир тĕлне.
Çулĕ пултăр сарлака,
Сарлака та яп-яка.
Йывăçсем ик айккипе
Ларччăр хумханса çилпе.
Йывăçсен кашни турачĕ
Çийĕнче кайăксем ларччăр,
Çунат çапчăр, юр юрлаччăр.
Эс çакна тăвас пулсан,
Манăн хĕрĕм — пулĕ сан.

Патша тепĕр ирхине
Пăхнă та уçса куçне
Янă кăшкăрса: «Эй, пурнăç!
Ăннипех эп тем те курнă.
Çакăн пек çула нихçан
Хамăн ĕмĕрте курман».
Çулĕ пулнă сарлака,
Çатма евĕр яп-яка.
Йывăçсем ик айккипе
Ларнă хумханса çилпе.
Туратсем çинче пин саслăн,
Çунатне çапса хаваслăн
Кайăксем юрра шăратнă,
Пĕтĕм таврана янратнă.

Патшан халь мĕн тумалла?
Ивана хĕр памалла,
Вăл чĕнме ярать хĕрне
Васкасах пĕр тарçине.
Хĕр килет, пуçне таять,
Патша сăмахне пуçлать:
— Халиччен ман сăмахран
Нихăçан та эс тухман.
Эс паян та итлен пулĕ,
Ан хурлан, ан тăк куççулĕ,
Чухăн ывăлĕ Иван
Упăшку пулмалли сан.

Хĕрĕ ним те шарламасть,
Нимĕскер те палăртмасть.
— Юрĕ,— тет,— ку таранччен
Эп сан сăмахран иртмен.
Хăй патша-атте хушсан,
Пултăр упăшкам Иван.
Ăшĕнче ун вут çунать,
Ивана хăй тарăхать,
Ма тесен, вăл кӳршĕри
Патша ывăлне юратнă.
Унпала сăмах та татнă.
(Халĕ ĕнтĕ пĕлтĕр-и?
Халĕ ĕнтĕ сисрĕр-и?)
Çавăнтах патша хĕрне
Иванпа кĕрекене
Юнашар кĕртсе лартать,
Вара чаплă туй тăвать.
Иван арăмĕпеле
Тепĕр кун каять киле.

Ывлĕпе кинне курсан,
Амăш савăнать чунтан.
Ыталать те чуптăвать,
Тату пурăнма хушать.
Патша хĕрĕ шарламасть,
Нимĕскер те палăртмасть.
«Иванран эп хăтăлатăп,
Çав-çавах кунтан таратăп»,—
Ăшĕнче вăл шухăшлать,
Хăй ултавлăн йăл кулать,
Çăвăнать çеç амăшпе,
Вăй вылять упăшкипе.
Иванпа ачашланать,
Чăтма çук йăпăлтатать.
Ырă кăмăллă Иван
Сисеймен çав ултава.
Шухăшланă: «Арăм ман
Пулчĕ çав тери аван».

Амӑшӗ пӗрре килтен
Ҫӳрше кайнине пӗлсен,
Патша хӗрӗ Ивана
Йӑлӑнмашкӑн тытӑнать:
— Арӑму вӗт-ха эп сан,
Эс ҫавах тем пытаран.
Сарлака та питӗ йӑрӑс
Ҫӗмӗл йӗплӗ ҫӳлӗ чӑрӑш
Лартрӑн пирӗн пахчара.
Эсӗ шӑп та пӗр каҫра
Турӑн кӗленче кермен,
Ҫул та турӑн ҫӳреме.
Мӗнле вӑй-хӑват пур сан,
Пӗлтерсем мана, Иван?
Юриех хӑй ҫупӑрлать,
Ҫушак евӗр шӑлӑнать.
Ырӑ кӑмӑллӑ Иван
Сисеймест ҫак ултава.
— Ҫуҫлӑ ҫӗрӗ пур-ҫке ман.
Ҫаҫхине мӗскер шутлан
Ир енне йӑлтах пулать,
Вӑл мана пит пулӑшать.
— Эс ӑна ӑҫта упран?
— Пурҫӑн ҫиппеле майран
Эп ӑна ҫакса ҫӳретӗп,
Халиччен салтман пӗрре те.

Ҫаҫхине, уйӑх тухсан,
Иван ҫывӑрса кайсан,
Патша хӗрӗ ерипен
Пӑт татать пурҫӑн ҫиппе,
Ҫӑларса илет ҫӗрре,
Вӗҫтерет вара тӳрех
Хайхи кӳршӗри патшан
Ывӑлӗ патне ҫуран.

Вӑранать Иван ирех
Малтанхи пек ҫӗр пӳртрех.

Майра куҫлă ҫĕрĕ ҫук,
Ҫумра патша хĕрĕ ҫук.
Виссе илчĕ ултава.
Тарăхса йĕрет Иван.
Мĕн тăвас халь малалла,
Мĕнлерех пурăнмалла?
Ҫакă самантра кĕреҫҫĕ
Йытăпа кушак пўрте.
— Пире пурнăҫ патăн,— теҫҫĕ,—
Пысăк парăм пур пирте.
Инкекре санран юлмастпăр,
Тăр пĕчченҫĕ хăвармастпăр,
Тен, пулать ҫĕрре тупма,
Хатĕрлен ҫула тухма.

Виҫҫĕн хăвăрт пуҫтарнаҫҫĕ,
Вăрăмах ҫула тухаҫҫĕ.
Уй-хир урлă, ялсем витĕр,
Васкаса утаҫҫĕ питĕ.
Нумай пулчĕ-и, сахал-и,
Вулаканăм, мĕскер калăн,
Юмахра вăл час пулать
Кĕскетме вăрăм ҫула.
Ак пĕр тинĕс хĕррине
Ҫитрĕҫ виҫҫĕн пĕр кунне.
Чарăнса вĕсем тăраҫҫĕ,
Тарăн шухăша путаҫҫĕ.
Тинĕс леш енне каҫма
Пĕртте ĕнтĕ ҫăмăл мар.
Вара йытă Ивана:
— Юл,—тет,—эс ку ҫырана.
Кушакпа эпир ишетпĕр,
Ҫитмелли ҫĕре ҫитетпĕр.
Эсĕ лар кĕтсе пире,
Каялла ҫитетпĕрех.
Вĕсене кĕтме пулса
Ҫыр хĕрне юлать ларса.

Тинĕсе кĕрсе каяççĕ,
Тăрăшса ишме пуçлаççĕ.
Тинĕс вăйлăн хумханать,
Хум çапать çеç çырана.
Çав-çавах кушакпа йытă
Парăнмасăр ишнĕ хыттăн.
Виçĕ кун иртсе кайсан,
Курăнать умра çыран.
Юлашки вăйне пухаççĕ,
Çырана кĕçех тухаççĕ.
Шăпах виçĕ кун канаççĕ.

Виçĕ кун иртсе кайсан,
Тапранаççĕ вырăнтан.
Çичĕ хир урлă каçсан,
Çич вăрман витĕр тухсан
Пĕр кермен вĕсем кураççĕ,
Тĕлĕнсе пăхма пуçлаççĕ.
Кермен йăлтăр-йăлтăрать,
Тăрри ылттăн курăнать.
Тавраллах çӳлĕ хӳме,
Ниепле май çук кĕме.
Кушакки вара йытта:
— Эсĕ тăр-ха,— тет,— кунта.
Куç хупса иличченех
Хăпарать хӳме çине.
Хӳмепе юнашарах
Йывăç ӳснĕ. Вăл вара
Ун çине сике парать.
Вулă тăрăх вăл анать,
Картишне кĕрсе каять.
Каллĕ-маллĕ хăй çӳрет,
Кирлине йăлт тинкерет.
Кушака çав самантра,
Яри уçă кантăкран,
Патша хĕрĕ асăрхать,
Вара савнине калать:
— Килте пурччĕ ман кушак,

Çакнашкалччĕ, апăрша.
Кăмăл тумăн-и мана,
Илсе кĕмĕн-и ăна?
Арçынни час килĕшет,
Кушака илсе кĕрет.

Çурçĕр тĕлĕ çывхарсассăн,
Вĕсем çывăрса кайсассăн
Кушак пӳрт тăрăх çӳрет,
Пур çĕре те тинкерет.
Çук ниçта та куçлă çĕрĕ,
Тĕплĕ хунă патша хĕрĕ.
Ак сасартăк вăл курать,
Пĕр шăши чупса пырать.
Кушак ялт! сиксе ӳкет,
Шăши çăвара лекет.
Йăлăнма пуçлать шăши:
— Мана пурнăç памăн-ши?
Мĕн ыйтан, йăлт пулĕ сан,
Юлмăп парăмра нихçан.
— Мана ним те кирлĕ мар,
Куçлă çĕрĕ тупса пар.
— Юрĕ,— тет шăши,— часах
Парăп эп ăна тупса.
Вĕлт кĕрет арча айне,
Кышлама пуçлать тĕпне.
Ак, кышлать, кышлать, кышлать,
Хăй валли шăтăк тăвать.
Шăтăкран вĕлт çеç кĕрет,
Час илсе тухать çĕрре.
Шăши чĕрĕ,— савăнать,
Кушакран вăл пытанать.
«Халь мĕнле тухса каяс,
Алăка епле уçас?»
Кушак кулянма пуçлать,
Акă макăрса ярать.
— Ыйхăран вăратрăн эсĕ,
Тухса кай, тепĕр тесессĕн,—

Патша хĕрĕ алăка
Яр уçать кĕç. Кушака
Çавă çеç-мĕн кирлĕ пулнă,
Хăй ĕçне вăл ĕнтĕ тунă.

Васкасах вăл хăпарать
Йăрăс йывăç тăррине,
Ун çинчен сике парать
Пур вăйран хӳме çине,
Хӳме тăрăх вăл анать
Çĕр çине, йытă патне.
Каялла хавасланса́х
Чуптараççĕ васкаса.

Тинĕсе кĕрсе каяççĕ,
Тăрăшса ишме пуçлаççĕ.
Тинĕс — тикĕс, тĕлĕрет,
Тӳперен хĕвел хĕртет.
Çитсен тинĕс варрине
Ыйтать йытă кушакран:
— Мана пар-ха çĕррине.
Аван мар-çке Иванран,
Уншăн ним те эп туман.
Халĕ эп йăтса пырам,
Вара Ивана парам.
— Ха, епле ырă пуласшăн,
Мана нимсĕр хăварасшăн.
Хайхисем, кушакпа йытă,
Тавлашсах каяççĕ хытă.
Чи хĕрӳллĕ вăхăтра
Кушак карнă çавара,
Куçлă çĕрĕ тинĕсе
Йăпăрт çеç юлать ӳксе.
Иккĕш те тӳрех чарнаççĕ,
Куççульпех йĕрме пуçлаççĕ:
— Мĕн тăвар халь, мĕн тăвар?
Тен, ун хыççăнах путар?
Çакă йывăр самантра,

Йытă курнă, çывăхрах
Пĕчĕк пулă ишсе пынă,
Ăна йытă кап çеç хыпнă.
Йăлăнма пуçлать ак пулă:
— Тархаслатăп, ырă пулăр,
Вилĕмрен мана хăтарăр,
Тинĕсе мана чăмтарăр,
Мĕн ыйтатăр, пĕтĕмпех
Тупса парăп эп халех.
— Пире ним те кирлĕ мар,
Куçлă çĕрĕ тупса пар.
— Юрĕ,— тет пулă,— часах
Тухăп тинĕсрен тупса.
Йытăпа кушак кĕтеççĕ:
— Улталарĕ пуль мур,— теççĕ.

Çăвара хыпса çĕрре
Пулă тухрĕ тинĕсрен.
Пулă чĕрĕ,— савăнать,
Тинĕсе шăмпăлт чăмать.
Çĕрĕ тупăннă. Вĕсем
Кайрĕç малалла ишсе.
Виçĕ кун иртсе кайсан,
Курăнать умра çыран.
Савăнса вĕсем ишеççĕ,
Çырана кĕçех çитеççĕ:
— Ак вăл куçлă çĕрĕ,— теççĕ,—
Мĕн шутлатăн, ту, Иван,
Çĕрĕ ĕмĕрлĕх халь сан.
Ырă ту ĕçчен çынна,
Вара тав тăвĕç сана.

— Юрĕ,— тет,— халь апатланăр,
Çул çинчен выртса та канăр.
Халăха ĕмсе тăран
Тĕпсĕр хырăм патшаран
Текех йăхĕ те ан юлтăр,
Халăх савăнтăр та култăр.

Виççĕн çыварма выртаççĕ,
Ќанлĕн тĕлĕрсе каяççĕ.

Варанать ирех Иван.
Таврара мĕнле аван!
Ана амăш çупăрлать,
Ăшшăн-ăшшăн чуптăвать.
Сар хĕвел кулса тăрать,
Халăх юрă шăрататать.

Ак пĕтет ĕнтĕ юмах,
Ирĕк парăр кăшт хушма.
Ивана эп кайса курнă,
Пит ăнса пырать ун пурнăç.
Ялĕпех ун хурăнташ.
Хĕрĕх те пĕр кин кĕртсен,
Тăрăс-тăрăс туй сиксен,
Пурăнма юрать чăн та.





# ПĂРÇА

*(Ю м а х)*

Юптарса-мĕн тăрар мар,
Юмаха тӳрех пуçлар,

Аслă ялăн хĕрринче,
Турикасăн вĕçĕнче,
Шăтăк-шатăк пĕр çуртра
Пурăннă пулать вара
Пĕр шăв-шавсăр, лăпкăн, иккĕн:
Ҡарчăккипеле старикĕ.

Шăл айне кăштах хума,
Хырăма улталама
Ҫу ҫитсессĕн ҫырлана,
Ҫĕр ҫитсессĕн кăмпана,
Ҫайнă, теççĕ вăрмана.
Ҫавăн пек майлаштарса
Пынă тек сыпăнтарса.

Хĕл ларсан вара вĕсем
Ҫăмака ҫине хăпарнă.
Ăшăпа реххетленсе
Ват шăмма тек хĕртсе ларнă.
Вĕсем илнĕ ывăҫа
Чăмламашкăн хыт пăрҫа.
Пĕр пăрҫи ҫавăн чухне
Ӳкнĕ, тет, тĕпсакайне.
Ҫарчăкки те, старикки те
*Тăрăшса шыранă питĕ:*
Тупăнман ҫавах пăрҫа,
Иккĕш те вăрҫа-вăрҫах
Ҫаялла вĕсем хăпарнă,
Лăплансан, чĕнмесĕр ларнă.
Вара иккĕш те ăшра,
Текех йăлăннă турра:
«Виличчен кăштах кăна
Ҫăтартсам ырă куна».

Акă ҫитнĕ ҫуркунне...
Ҫив урайăн хăмине
Хăпартать темскер тĕртсе.
Вĕсем пăхнă тĕлĕнсе.
Ҫу пăрҫа калчаланса,
Ҫуркунне шăтса тухсан,
Урай витĕр, мачча витĕр,
Улăм витнĕ пӳрт ҫи витĕр
Ӳссе кайнă ҫӳлелле
Ашкăрса, тĕлĕнмелле.

Çитнĕ çу. Старикпе карчăк
Килĕнче мĕнле-ха ларччăр?!
Хĕрлĕ-хĕрлĕ çырлине
Хурсанах чĕлхе çине
Ирĕлсе хăех каять,
Çăттармасăр çăттарать.

Кĕр çитсен, пăрçа çинчен
Асилеççĕ ват çынсем.
— Татса ан пĕреххутчен,—
Тет хай карчăк тилмĕрсе.—
Михĕ ил те, яра пар,
Хăрамашкăн кирлĕ мар.

Миххе пилĕк тавралла
Старик хытă явалать.
Пӳрт тăрне вăл улăхать.
Çирĕп тунаран тытать,
Хăпарма вара пуçлать.

Хăпарать те хăпарать,
Пăрçа çук çавах умра.
«Ăçта кайнă вăл ӳссе?—
Шухăшлать старик хĕрсех,—
Ырлăха-и, хурлăха-и
Е ман пурнăç ăнса кайĕ?..»

Çичĕ пĕлĕт тӳпине
Çитнĕ вăл ерипенех.
Ак вăл пĕлĕте сирсе,
Хăраса та шикленсе,
Малалла пăха пуçлать,
Вара акă мĕн курать:
Ун пăрçи çара ларать,
Пĕр хутаç çук тунара.
Хăварасчĕ хăть ятне
Тутанса пăхма пĕрне.
Тинкерет вăл малалла,

Ун йалтах-ҫке курмалла.
Акӑ пӗр шап-шур сухаллӑ
(Сӑнӗнчен вӑл питӗ паллӑ)
Ҫын пӑрҫа ҫапать иккен,
Ҫапнӑ май юрлать хуллен.
Чӑтаймасть старик:— Эй, турӑ,
Ман пӑрҫапала мӗн турӑн?
Хӗл каҫаттӑм эп унпа
Хамӑн савнӑ карчӑкпа.

Ҫаврӑнса пӑхать сухал:
— Куҫӑм умӗнчен тасал!
Эпӗ хам ҫумӑр ҫутарнӑ,
Сахал мар-ҫке тар юхтарнӑ.
Хӗвеле хӗрӳ хӗрттернӗ,
Ҫак пӑрҫасене ӳстернӗ.

— Шеллесем ху ывӑлна,—
Йалӑнать старик ӑна.—
Эп сана ахаль туман,
Сан умна ҫурта та лартнӑ,
Хӑш чух, пуҫҫапма тӑрсан,
Саншăн ҫамкана та ватнӑ.
Шеллесем...

— Татах-и эсӗ?—
Турӑ кӑшкӑрать ҫиллессӗн,
Тӑпачпа ярать сулса.
Аран ҫеҫ ак пӑрӑнса
Юлма ӗлкӗрет старик,
Кӑшкӑрса ярать шари.

Пӑрҫа хӑмӑль татӑлать,
Старик ҫӗрелле чӑмать.

Пулнӑ пуль старик телейӗ,
Ӳкнӗ чух, эсир мӗн тейӗр,
Вӑл ҫакланнӑ туратран,
Пӗр ҫӗртен те аманман.

Тăрса юлнă чĕп-чĕрех,
Киле çитнĕ чиперех.

— Карчăк,— тенĕ вăл çитсен,—
Тасалар турăшсенчен.
Хăйсем чĕмсĕррĕн лараççĕ,
Пирĕнне хыпса çăтаççĕ.

Çав кунтан чиркӳ енне
Вăл кайман, тет, ĕмĕрне.





# Акăшпи

*( Юмах )*

Пĕр хресченĕн пулнă ывăл,
Ӳссе çитĕннĕ вăл сывă.
Ашшĕ-амăш кăмăлланă,
Алтиер тесе ят панă.
Чăннипех-мĕн, сăн-питрен,
Каччă пулнă пит хитре.
Вăл çӳрерĕ сунара.
Ун пекки çак таврара
Тĕл перен никам пулман,
Çыннисем те тупăшман.

Çич çулхи хурамаран
Авнă, тет, вăл уххине,
Çамрăк-çамрăк туйраран
Тунă имĕш йĕппине.
Кашкăрсем вăл килнине
Сиссе илнĕ, тет, таçтан,
Упасем те шăтăкне
Тарса кĕнĕ, тет, туйсан;
Çав-çавах Алтиертен
Вĕсем вĕçерĕнеймен.
Кайăк-кĕшĕке вара
Тытнă вăл пĕр самантрах.
Ухă йĕппи лексенех
Кайăк ӳкнĕ уҥ умне.
Чĕп кăларнă кунсенче
Шуйхатман кайăксене.
Чĕпĕ ӳктĕр йăвинчен,—
Илсе лартнă вырăнне.
Ырă кăмăллă, чипер
Каччă пулнă Алтиер.

Пĕрре кайнă вăрмана
Алтиер ухутана.
Кĕрсе пăхнă чăтлăха,
Кайса пăхнă хырлăха,
Пурпĕрех нимле чĕрчун
Тĕл пулман ăна çак кун.
Каç пулттипеле кăна
Вăл курать пĕр пакшана.
Уххине пеме çĕклет,
Çавăнтах пакша çĕтет.
Тарăхсах каять-çке каччă:
«Куҥ пекки нихçан пулманччĕ!»
Малалла утать, утать,
Хай пакша курнах каять.
Уххине каллех çĕклет,
Çавăнтах пакша çĕтет.
«Мĕскер пулчĕ-ха мана,

Култаратăп пакшана?», —
Алтиер хыт тарăхать,
Татах малалла утать.
Тепĕр хут курнать пакша,
Тытаймасть-çке апăрша.
Ак хĕвел те анса ларчĕ,
Уйăх та кусса хăпарчĕ,
Алтиер çӳрет çаплах
Палламан вăрманпала.
Ăçталла ан пыр, ан кай,
Çул тупмашкăн çук-çке май.
«Вăрманта нумай хут пулнă,
Çĕр каçмашкăн та эп юлнă,
Çухалса курман нихçан.
Мĕскер пулчĕ-ха паян?
Пĕр пакшашăн çул çухатрăм,
Тен, вăл юриех тухатрĕ?»
Алтиер шутла пуçлать,
Малаллах хăй уттарать.

Ак çитет вăл ир енне
Пĕр çут кӳлĕ хĕррине.
Çул çӳренĕ,— нихăçан
Кун пек кӳлĕ вăл курман.
Çӳлĕ-çӳлĕ хăмăшсем,
Çилпеле тек сĕрĕшсе,
Тем çинчен пăшăлтатаççĕ,
Чуна çырана туртаççĕ;
Шывĕ тикĕс çав тери,
Курăнмасть пĕр хум йĕрри,
Тĕпĕнче çут çăлтăрсем,
Çăлтăр мар-мĕн,— пулăсем
Йăлтăр-йăлтăр йăлтăраççĕ,
Йăр та яр çеç ярăнаççĕ.
«Шывĕпе пите çăвам,
Вара кăшт выртса канам.
Вăй пухсассăн, малалла
Уттарам, тупам çула»,—

Пĕшкĕнме кăна тăрать,
Шăпах çавă вăхăтра:
— Çăвăнма, ачам, тăхта,—
Илтĕнет мăн сас таçтан,—
Çăвăнма тытăниччен,
Ыйтмаллаччĕ хуçинчен.
Шарт сиксе ÿкет çавтер.
Çултан çĕтнĕ Алтиер.
Çаврăнса пăхать. Хыçра
Пĕр мучи тăра парать:
Шур сухаллă, шурă çÿçлĕ,
Сăнран — типшĕм, пĕвĕ — çÿлĕ.
— Халь атя, пÿрте кĕрер,—
Тет мучи,— ларса пуплер.

Акă — çĕр çулхи юман,
Темех çук пĕрре пăхсан.
Мучи пычĕ, аллипе
Хуйăртан ярса тытать,
Сăрнай-шăпăр çеммипе
Алăк уçăлса каять.
Алтиер шалт тĕлĕнет,
Вăл курман кун пеккине.
Кĕчĕç. Алăк хупăнать,
Кĕвĕ-çемĕ чарăнать.
Кун пек çурт, атьсемĕри,
Тĕнчере курман пĕри.
Кашни пÿлĕм хătлă, капăр.
Пур çĕрте те йăлтăр-ялтăр
Çиçкĕнсе кăна тăрать,
Куç хупса иличченех
Темиçе тĕс улшăнать,
Асамат кĕперрине
Халь умрах курма пулать.
Мучи каччăна лартать,
Çакăн пек сăмах пуçлать:
— Эп кĕтеттĕмччĕ сана,
Алтиерĕм, тахçанах.

Пакша хыççăн килтĕн эс
Çил патшин çĕрне-шывне.
Санăн кăмăлу пулсассăн,
Эпĕ илĕттĕм хавассăн
Çак кӳлле хураллама,
Ĕçĕ пĕртте йывăр мар.
— Хирĕç мар эп, килĕшер,—
Тет сăпайлă Алтиер.

Çĕр каçсассăн, ирхине
Тухрĕ кӳлĕ хĕррине.
Аллинче ун вăрăм пушă,
Шартлаттарчĕ те пĕр хушă
Утрĕ ешĕл çыранпа,
Тĕпчесе пĕлес шутпа.
Кун каçах утса çӳрерĕ,
Ним курмарĕ, ним илтмерĕ.
Таврана ĕнтрĕк çапсан,
Таврăнать вăл ывăнса.
— Мĕскер куртăн-ха, пĕлтер,
Ман хуралçăм, Алтиер?
— Нимĕскер те курăймарăм,
Сыхласса аван сыхларăм,—
Пĕлтерет вăл старике.
— Курманни те юрĕ-çке,—
Çил патши калать ăна,—
Халь эппин выртса канах.

Каллех, тепĕр ирхине,
Вăл илет те пушине
Тухать кӳлĕ хĕррине.
Шывĕ тикĕс çав тери,
Курăнмасть пĕр хум йĕрри.
Хăмăшсем пăшăлтатаççĕ,
Тем çинчен-çке канашлаççĕ.
Хĕвеле йĕкĕт пăхать,
Кăнтăр тĕлĕ çывхарать.
Çавăн чух вăл сывлăшра

Ҫайӑк ушкӑнне курать.
Тӳрех кӳлӗ хӗррине
Анса ларчӗҫ кайӑксем.
Вӑл пӑхать вӗсем ҫине:
Акӑшсем иккен кусем.
Шутлама пуҫлать вӑл акӑ:
Ушкӑнра — вуникӗ акӑш.
Шур тумне вӗсем хываҫҫӗ,
Пикесем пулса тӑраҫҫӗ.
Пит хитре хӑйсем сӑнран,
Куҫ илме май ҫук пӑхсан.
Алла-аллӑн тытӑнса,
Йӑл кулса та выляса,
Ушкӑнпа кӳлле кӗреҫҫӗ,
Ярӑнса кӑна ишеҫҫӗ.
Тӑр шывра реххетленсе
Чылай вӑхӑт ҫӳресен,
Ҫырана вӗсем тухаҫҫӗ,
Пурте хӑвӑрт тумланаҫҫӗ.
Пӗтереҫҫӗ тумланса,
Ҫаллех акӑшсем пулса
Ҫунатне сарса яраҫҫӗ,
Васкаса вӗҫсе каяҫҫӗ.
Таврана ӗнтрӗк ҫапсан,
Йӗкӗт таврӑнать ырса.
— Мӗскер куртӑн-ха, пӗлтер,
Ман хуралҫӑм, Алтиер?
— Ирхине чипер ҫӳрерӗм,
Нимӗн те пулса иртмерӗ.
Ҫӑнтӑрла вуникӗ акӑш
Вӗҫсе килчӗҫ акӑш-макӑш.
Шур тумне хывсан, вӗсем
Пулса тӑчӗҫ пикесем.
Шыва кӗчӗҫ, вӑй вылярӗҫ,
Тумлансассӑн, вӗҫсе кайрӗҫ,—
Пӗлтерет вӑл старике.
— Курни хушӑн, юрӗ-ҫке,—
Ҫил патши калать ӑна,—

Халь ирччен выртса канах.
Ҫасхи вăхăт — ҫаялла,
Ирхи шухăш — малалла.

Тухăҫ енĕ ерипе
Витĕнсен сенкер тĕспе
Алтиер ак вăранать,
Хурала пуҫтарăнать.
— Ҫайма ан васка, ачам,
Санпала кăшт калаҫам,—
Тет ăна старик чарса,
Хăйпе юнашар лартса.—
Виҫĕ ҫул ман патăмра
Тăтăн эс хуралҫăра.
«Виҫ ҫул мар-ҫке, виҫĕ кун»,
Тейĕн эсĕ лăпкă чун.
Анчах манăн ҫĕршывра
Пĕр ҫулпа кун тан вара.
Эсĕ тăрăшса ĕҫлерĕн,
Шăпуна ӳпкелемерĕн.
Тăрăшнишĕн тав тума
Паян кăмăлăм пур ман.
Шăпах кăнтăр тĕлĕнче
Пул эс кӳлĕ хĕрринче.
Акăшсем вĕҫсе килсен,
Хывăнса кӳлле кĕрсен,
Хуна килĕшнĕ пикен
Тумтирне хур пытарса.
Вунпĕрĕш вĕҫсе кайсан,
Пĕр-пĕччен тăрса юлсан,
Йăлăнма пуҫлать сана.
Виҫĕ хут чĕнсен кăна
Тухса тăр эс ун умне,
Ҫав-ҫавах ан пар тумне.
Ҫайран калăп ыттине,
Ҫай халь кӳлĕ хĕррине.

Алтиер тухса каять,
Хăмăш хушшине выртать.
Таврана вăл тинкерет,
Мĕнпур сас-чĕвве итлет.
Çут хĕвел пуç тăрринче,
Ялтăрса тăрать тĕнче.
Қăнтăр тĕлĕ-çке шăпах.
Вĕçсе килчĕç ушкăнпа
Вуник акăш ярăнса,
Ларчĕç çыр хĕрне анса.
Шур тумне вĕсем хываççĕ,
Пикесем пулса тăраççĕ.
Пурте пит хитре сăнран,
Қуç илме май çук пăхсан.
Халь хăшне суйламалла?
Қунта йăлт аптрамалла.
Ак пĕри кая юлать,
Çыранта пăхса тăрать.
Çивĕт вĕçĕ ука пек,
Йăлтăрать çеç хĕвелпе.
Ак çакна-çке тытмалла,
Ун тумне пытармалла.
Пĕр шăв-шавсăр, йăпшăнса
Тум патне çитет шуса.
Хĕстерет хул хушшине,
Пытанать пĕр тĕм хыçне.
Тăр шывра реххетленсе
Чылай вăхăт çӳресен,
Çырана вĕсем тухаççĕ,
Тумĕсем патне пыраççĕ.
Вунпĕр акăш тумланать,
Тумлансан, вĕçсе каять.
Пĕри юлчĕ пĕр-пĕччен
Аслă кӳлĕ хĕрринче.
Хăй тумне чылай шырарĕ,
Пурпĕрех-çке тупаймарĕ.
Аптраса çитсессĕн, акăш
Йăлăнма пуçларĕ акă:

— Тумӑма паракана
Эп тав тӑвӑп яланах.
Хамран аслӑрах пулсан,
Чӗнӗп эп ӑна чунтан
Ĕмӗрех: «Пиччем»,— тесе.
Хӗрипраҫ тавраш пулсан,
Чӗнӗп эп: «Аппам»,— тесе.
Шӑп тӑрать вӑл пӗр кана,
Никам сас памасть ӑна.
Йӑлӑнма каллех пуҫлать;
Йӗрес пек-ҫке тархаслать:
— Тумӑма паракана
Эп тав тӑвӑп яланах.
Хамран кӗҫӗнрех пулсан,
Чӗнӗп эп ӑна чунтан
Ĕмӗрех: «Шӑллӑм»,— тесе.
Хӗрипраҫ тавраш пулсан,
Чӗнӗп: «йӑмӑкӑм»,—тесе.
Ҫук никам та шарламасть,
Ун тумне илсе пымасть.
Путать тарӑн шухӑша,
Ҫунтарать пике ӑша.
Йӑлӑнма пуҫлать каллех
Вӑл вӗри куҫҫульпеле:
— Тумӑма паракана,
Инкекрен ҫӑлакана,
Хампа тантӑш вӑл пулсан:
«Упӑшкам»,— тейӗп чунтан...
Алтиер ҫав вӑхӑтра
Ун умне тухса тӑрать.
Ҫил патши тем хушӑра
Ҫакӑнта килсе тухать:
— Акӑшпи,— тет вӑл хӗре,—
Эсӗ пӗртте ан хурлан.
Пӗрлештерӗп эп сире,
Мӑшӑр пулӑр паянтан.
Тумланса пике тумне,
Тӑр эс упӑшку ҫумне,—

Вăл кĕпе парать ăна.
Акăшпи пăрăнсанах,
Алтиер патне пырса
Вăл калать пăшăлтатса:
— Йăлăнса та тилмĕрсе,
Сан умна чĕркуçленсе
Ыйтĕ вăл акăш тумне.
Эс ан пар мĕн ыйтнине.
Хыт упра эс арăмна.
Вĕçертсен алран ăна,
Çухататăн ялана.
Çак кӳлле шур акăшсем
Килес çук текех вĕçсе.
Акăшпи час тумланать,
Алтиер çумне тăрать.
Çил патши телей сунать,
Тӳр çул кăтартса ярать.

Алтиер çитет киле
Акăшпипеле пĕрле.
Хăйĕн ашшĕ-амăшне
Вăрманта мĕн пулнине
Тĕппипех вăл пĕлтерет.
«Ку ман арăм пулать»— тет.
Ашшĕ-амăш хĕпĕртет:
Ялан ырă пурăнма,
Кун-çулра телей курма
Вĕсене чунтан пиллет.

Пурăнма вĕсем пуçлаççĕ,
Савăнаççĕ, юп кураççĕ.
Пĕр-пĕрин çине пăхсан,
Çуталса тăнă ялан
Пичĕсем вĕсен телейлĕн,
Çутă уйăхăн, хĕвелĕн.

Вăхăт кайнă малаллах,
Вăл васкатнă кун-çула.

Кунсем тăнă пит чипер.
Тӳсеймест-çке Алтиер,
Вăл илет те уххине
Сунара тухса каять.
Хăйĕн савнă арăмне
Амăшпе-çке хăварать.
Қăнтăр тĕлĕ çывхарсан,
Акăшпи ак амăшне
Йăлăнма пуçлать чунтан:
— Парăрсам акăш тумне,
Асилем ĕлĕкхине.
Тӳпере кăшт ярăнам,
Чунăма эп пусарам.
— Ырă кинĕм, чиперкке,
Эп тĕлне пĕлместĕп-çке,—
Амăшĕ кинне калать,
Сăмаха пăрса ярать.
Алтиер, хĕвел ансан,
Таврăнать те сунартан:
— Хăвăрăн ĕçлĕ куна
Ирттерни çинчен мана
Қаласа парсан юрать,—
Амăшне вăл шахвăртать.
— Қунĕ иртрĕ аванах,
Қинпе кĕтрĕмĕр сана,—
Акăшпи йăлăннине
Қаламасть хăй ывăлне.

Вăхăт кайнă малаллах,
Вăл васкатнă кун-çула.
Алтиер пĕр кунхине
Илнĕ те хăй уххине
Сунара тухса уттарнă.
Савнă арăмне хăварнă
Хăйĕн амăшĕпеле,—
Ларĕç йăпанса пĕрле.
Қăнтăр тĕлĕ çывхарсан,

Акӑшпи ак амӑшне
Тилмӗрме пуҫлать чунтан:
— Парӑрсам акӑш тумне,
Асилем ӗлӗкхине.
Тӳпере кӑшт ярӑнам,
Чунӑма эп пусарам.
Хӑвӑр савнӑ кинӗре
Ененсемӗрччӗ пӗрре.
— Ырӑ кинӗм, чиперкке,
Эп тӗлне пӗлместӗп-ҫке.
Ма ахаль апла калан,
Ененетпӗр-ҫке ялан,—
Амӑш йӑпатать кинне,
Пӑратех хӑй сӑмахне.
Алтиер, хӗвел ансан,
Таврӑнать те сунартан:
— Хӑвӑрӑн хӗрӳ куна
Ирттерни ҫинчен мана
Каласа парсан юрать,—
Амӑшне вӑл шахвӑртать.
— Кунӗ иртрӗ аванах,
Хытӑ кӗтрӗмӗр сана,—
Акӑшпи тилмӗрнине
Пӗлтермест хӑй ывӑлне.

Вӑхӑт кайнӑ малалла,
Вӑл васкатнӑ кун-ҫула.
Кунсем тӑнӑ пит чипер.
Каллех пирӗн Алтиер.
Ларайман килте чӑтса.
Хӑйӗн уххине ҫакса
Сунара тухса уттарнӑ.
Савнӑ арӑмне хӑварнӑ
Хӑйӗн амӑшӗпеле,
Ларӗҫ йӑпанса пӗрле.
Кӑнтӑр тӗлӗ ҫывхарсан,
Акӑшпи ак амӑшне
Йӑлӑнма пуҫлать чунтан:

— Парăрсам акăш тумне,
Асилем ĕлĕкхине.
Тӳпере кăшт ярăнам,
Чунăма эп пусарам.
Хăвăр савнă кинĕре
Ĕненсемĕрччĕ пĕрре,—
Куççульпех вăл тилмĕрет.—
Ĕненсем ĕнтĕ, анне,
Пар мана акăш тумне.
Эсĕ ху та çамрăк пулнă,
Вăйăра вылянă-кулнă.
Юн вылять-çке ӳт-пӳре,
«Çунатлан», ыйтать чĕре,—
Акăшпи хыт тилмĕрет.
Курсан куçри куççуле
Амăш чунĕ çемçелет.
Арчине уçса ярать,
Леш тума кинне парать.
Акăшпи тумне илет,
Пичĕ-куçĕ йăл çиçет.
Акă çунатне вăл сарчĕ,
Тӳпене вĕçсе хăпарчĕ.
Ункăларĕ пӳрт çинче
Вăл шăпах виçĕ хутчен.
Кĕç анать те аяла
Амăшне çапла калать:
— Сывпул, кăмăллă анне,
Сана манмăп ĕмĕрне.
Эпĕ кайрăм инçене,
Кĕленче ту тăррине.

Алтиер, каç пулттипе,
Сунартан киле килет.
Ана амăш куççульпе
Алăкра кĕтсе илет.
Тĕппипех хăй ывăлне
Пĕлтерет мĕн пулнине.
Алтиер ӳкет хуйха:

«Манăн мĕн тумалла халь?»
Шухăшлать вăл, шухăшлать.
Вара çил патши патне
Пĕлтермешкĕн хуйăхне
Килĕнчен тухса утать.
Çил патши патне çитет,
Пĕтĕмпех вăл пĕлтерет.
— Упрамашкăн арăмна
Эп каларăм-çке сана,—
Тет хайхи патша ăна.—
Пĕр асамăç тухатса
Хĕртен акăш пек туса
Тыткăнра ялан усранă.
Пĕр çултан çеç пикене
Манăн кӳлĕ хĕррине
Вăл шыва кĕмешкĕн янă.
Эс хăтартăн пулĕ теттĕм,
Сана хытă ĕненеттĕм.
Тухатни иртсе каятчĕ,
Виçĕ кун кăна юлсаччĕ.
Çав кунран акăш тумне
Асилместчĕ ĕмĕрне.
Калама кăна канас,
Халь ăна ăçта шырас?
— «Эп каятăп инçене,
Кĕленче ту тăррине»,
Тенĕ тет вăл аннене.
— Пăхăр ту çинчен эп илтнĕ,
Кĕмĕл ту çинчен эп илтнĕ,
Ылттăн ту çинчен те илтнĕ,
Кĕленче ту пуррине
Эп илтменччĕ ĕмĕрне.
Чĕнем-халĕ çилсене.—
Сухалне тамалантарчĕ,
Шур çӳçне йăлт арпаштарчĕ,
Ячĕ хытă шăхăрса,
Вăрман кайрĕ янраса.

Вĕçсе çитрĕ кăнтăртан
Кăнтăр çилĕ кашласа:
— Эй, патшам, мĕскер хушан?—
Ыйтрĕ вăл пăшăлтатса.
— Кăнтăр çилĕ, эс таçта та
Пĕр кайсан çитсе куратăн.
Кĕленче ту тĕл пулман-и,
Ун çине ларса канман-и?
— Çук,— тет çил пăшăлтатса,
Çулçăпа вăй выляса.
Вĕçсе çитрĕ тухăçран
Тухăç çилĕ ташласа:
— Эй, патшам, мĕскер хушан?—
Ыйтрĕ вăл, пуçне тайса.
— Тухăç çилĕ, эс таçта та
Пĕр тухсан çитсе куратăн.
Кĕленче ту тĕл пулман-и,
Ун çине ларса канман-и?
— Çук,—тет çил, кăшт хумханса,
Тĕм çине канма ларса.
Вĕçсе çитрĕ çурçĕртен
Çурçĕр çилĕ çиленсе:
— Эй, патшам, мĕн кирлĕрен
Мана илтĕн-ши чĕнсе?
— Çурçĕр çилĕ, эс таçта та
Çӳресе-çитсе куратăн.
Кĕленче ту тĕл пулман-и,
Ун çине ларса канман-и?
— Курнă,— тет çил уласа,
Çавраçил çавăрттарса.
— Итлĕр манăн сăмаха,
Ĕç хушатăп сире халь.
Тăрăшсамăрччĕ пурте:
Эсир çакă йĕкĕте
Кĕленче ту тăррине
Çитерсе, тархасшăн, ярăр.
Пулăшу кирлĕ чухне
Пулăшмашкăн харăс васкăр,

Алтиер, халь эс итле:
Сан нумай ҫӳремелле.
Виҫ аппа пурччӗ-ҫке ман,
Вӑтӑр ҫул ӗнтӗ курман.
Ҫула май вӗсем патне
Пурпӗр эс лекетӗнех.
Эсӗ вӗсене кала
Ман ятран хӗрӳ салам.
Ӗҫ туса пама ыйтсан,
Килӗш эсӗ савӑнса.
Ӗҫшӗн тӳлеме тӑрсан,
Мӗн параҫҫӗ, ил ҫавна.
Кирлӗ пулӗ, тен, хӑвна.
Сывӑ пул-ха, Алтиер.
Кӑнтӑр ҫилӗ, эй, вӗҫтер!

Кӑнтӑр ҫилӗ каш-кашларӗ,
Вӑрман шавлама пуҫларӗ,
Йӑтрӗ те Алтиере
Ҫӳлелле вӗҫсе хӑпарчӗ.
Аслӑ, ирӗк тӳпере
Пӗлӗте тӗртсе хӑварчӗ.
Ҫутҫанталӑк уҫҫинче
Вӗсем вӗҫрӗҫ чылайччен.
Пӗр хӗвеллӗ кунхине
Анса ларчӗҫ хир варне.
Алтиер пӗр ҫурт курать,
Унталла вӑл уттарать.
Вӑл пӑхать: ҫурт умӗнче
Ларать карчӑк пӗр-пӗччен.
— Сывлӑх пултӑр, асанне,—
Алтиер ӑна чӗнет.
— Ыр суннишӗн тав сана.
Хисеплерӗн ват ҫынна.
Ӑҫтисем пулатӑр-ха,
Ӑҫталла каятӑр-ха?
— Ҫил патши ҫӗршывӗнчен..
— Манӑн шӑллӑм патӗнчен?—

Карчăк тĕлĕнсе ыйтать,
Юнашар ларма хушать.
— Калăр, терĕ вăл, салам.
— Тавтапуç сана, ачам.
Вăтăр çул ăна курман,
Мĕнлерех вăл халь сăнран?
Калаçаççĕ, калаçаççĕ,
Унтан апата ләраççĕ.
Апат хыççăн, çакă карчăк
Алтиер çине пăхса:
— Вăй-хал çук-çке, чавса парччĕ
Виç йăран кăмăл туса,—
Тет, кĕреçине парса.
— Юрĕ, йывăр ĕçех мар,
Вырăнне кăтартса пар.

Алтиер чавать, чавать,
Пичĕ тăрăх тар юхать.
Хĕвел аниччен вара
Туса хучĕ виç йăран.
— Тав сана, ĕçчен ачам.
Ĕçшĕн мĕн сана парам?
Кĕреçен çивĕччĕшне
Хуçса чик ху кĕсйӳне.
Мĕнех илĕн карчăкран?
Урăх нимĕн те çук ман.
Пурнăçра, тен, кирлĕ пулĕ,
Тикĕс мар-çке çын кун-çулĕ.

Кĕреçен çивĕччĕшне
Алтиер хуçса илет,
Тутăрпа вара чĕркет,
Чикет хăйĕн кĕсйине.
— Манпала эс уçă пул,
Ăçталла выртать сан çул?—
Вăл ыйтать Алтиертен,—
Пĕлтерсемччĕ, ан шиклен.
Мĕн пулса мĕн иртнине,
Ăçталла çул тытнине

Алтиер йӑлтах калать,
Карчӑк тимлесе тӑнлать.
— Питӗ вӑйлӑ вӑл асамӑç,
Çӗнтерейӗн-ши ӑна?
Виçӗ хӗр унта ман хамӑн
Тыткӑнра-çке пурӑнать.
Çавӑнпа шӑллӑм патне
Вӑтӑр çул ура пусман.
Вӑл курасшӑн хӗрсене,—
Хӗрсем пур та, çук та ман.
Пуçна сыхлама хушатӑп,
Çӗнтерме вӑй-хал сунатӑп.
Сывӑ пул, чипер çӳре,
Тӑрӑш, çит çитес çӗре.

Тухӑç çилӗ ак çитет,
Йӗкӗте вӑшт çеç çӗклет.
Тӳпере вӑл çӑлтӑра
Кӑмӑллӑн алне парать.
Çутçанталӑк уççинче
Вӗсем вӗçрӗç чылайччен.
Пӗр хӗвеллӗ кунхине
Анчӗç ак вӑрман хӗрне.
Алтиер пӗр çурт курать,
Унталла вӑл уттарать.
Вӑл пӑхать: çурт умӗнче
Ларать карчӑк пӗр-пӗччен.
— Сывлӑх пултӑр, асанне,—
Алтиер ӑна чӗнет.
— Ыр суннишӗн тав сана.
Хисеплерӗн ват çынна.
Ӑçтисем пулатӑр-ха,
Ӑçталла каятӑр-ха?
— Çил патши çӗршывӗнчен...
— Манӑн шӑллӑм патӗнчен?—
Карчӑк тӗлӗнсе ыйтать,
Юнашар ларма хушать.
— Калӑр, терӗ вӑл, салам.

— Тавтапуҫ сана, ачам.
Вăтăр ҫул ăна курман,
Мĕнлерех вăл халь сăнран?
Ķалаҫаҫҫĕ, калаҫаҫҫĕ,
Унтан апата лараҫҫĕ.
Апат хыҫҫăн, ҫакă карчăк
Алтиер ҫине пăхса:
— Вăй-хал ҫук, вут ҫурса парччĕ,—
Тет-ҫке, пурттине парса.

Алтиер ҫурма пуҫлать,
Ҫамки тăрăх тар юхать.
Шăп хĕвел анса ларсан,
Вăл туса хурать шаршан.
— Тав сана, ачам, чунтан,
Ĕҫшĕн мĕн парас-ха ман?
Хуҫ та пурттăн ҫивчĕшне,
Чиксе хур ху кĕсйӳне.
Пурнăҫра, тен, кирлĕ пулĕ,
Тикĕс мар-ҫке ҫын кун-ҫулĕ.
Алтиер хуҫса илет
Ҫакă пурттăн ҫивчĕшне,
Вара тутăрпа чĕркет,
Чикет хăйĕн кĕсйине.
— Манпала эс уҫă пул,
Ăҫталла выртать сан ҫул?
Мĕн пулса мĕн иртнине,
Ăҫталла ҫул тытнине
Алтиер йăлтах калать,
Ķарчăк тимлесе тăнлать.
— Питĕ вăйлă вăл асамăҫ,
Ҫĕнтерейĕн-ши ăна?
Пилĕк хĕр унта ман хамăн
Тыткăнра-ҫке пурăнать.
Ҫавăнпа шăллăм патне
Вăтăр ҫул ура пусман.
Вăл курасшăн хĕрсене,—

Хĕрсем пур та, çук та ман.
Сывă пул, чипер çӳре,
Тăрăш, çит çитес çĕре.

Çурçĕр çилĕ уласа
Вăрмана ларать анса.
Вăл çĕклет Алтиере,
Хăпарать ак çӳлелле.
Уйăха-çке тӳпере
Кĕç хуплать пĕлĕтпеле.
Çутçанталăк уççинче
Вĕсем вĕçрĕç чылайччен.
Çурçĕр çилĕ ывăнать,
Çĕрелле анма пуçлать:
— Кĕленче ту тăррине
Питĕ йывăр хăпарма.
Çакă улăх варрине
Эп ларатăп халь канма.
Ак ларать вăл улăха.
Вăл вара хăвалăха
Ерипен кĕрсе каять,
Туратсем çине выртать.
Канлĕн-канлĕн ярăнса
Вăл каять час çывăрса.
Алтиер пĕр çурт курать,
Унталла вăл уттарать.
Вăл пăхать: çурт умĕнче
Ларать карчăк пĕр-пĕччен.
— Сывлăх пултăр, асанне,—
Алтиер ăна чĕнет.
— Ыр суннишĕн тав сана.
Хисеплерĕн ват çынна.
Ăçтисем пулатăр-ха,
Ăçталла каятăр-ха?
— Çил патши çĕршывĕнчен...
— Манăн шăллăм патĕнчен?—
Карчăк тĕлĕнсе каять,
Юнашар ларма хушать.

— Ҫалăр, терĕ вăл, салам.
— Тавтапуç сана, ачам.
Вăтăр çул ăна курман,
Мĕнлерех вăл халь сăнран?
Ҫалаçаççĕ, калаçаççĕ,
Унтан апата лараççĕ.
Апат хыççăн, çакă карчăк
Алтиер çине пăхса:
— Вăйăм çук-çке, вырса парччĕ
Карчăка сума суса.
Вир ларать ман пĕр ана,
Ҫил вĕрет те — тăкăнать, —
Тет-çке, çурлине парса.

Алтиер вырма пуçлать,
Ҫурăм та ĕнтĕ тарлать.
Каç пулттипеле кăна
Пĕтерет вăл анана.
— Тав сана, ачам, чунтан,
Ĕçшĕн мĕн парас-ха ман?
Хуçса ил çурла шăлне?
Чиксе хур ху кĕсйӳне.
Пурнăçра, тен, кирлĕ пулĕ,
Тикĕс мар-çке çын кун-çулĕ.
Алтиер çурла шăлне
Хуçса чикрĕ кĕсйине.
— Манпала эс уçă пул,
Ăçталла тытатăн çул?
Мĕн пулса мĕн иртнине,
Ăçталла çул тытнине
Алтиер йăлтах калать,
Карчăк тимлесе тăнлать.
— Питĕ вăйлă вăл асамăç,
Ҫĕнтерейĕн-ши ăна?
Ҫичĕ хĕр унта ман хамăн
Тыткăнра-çке пурăнать.
Ҫавăнпа шăллăм патне
Вăтăр çул ура пусман.

Вăл курасшăн хĕрсене,—
Хĕрсем пур та, çук та ман.
Пуçна упрама хушатăп,
Çĕнтерме кăна калатăп.

Хăва хумханма пуçлать,
Çурçĕр çилĕ вăранать.
Ак çĕклет Алтиере,
Малалла вăл вĕçтерет.
Çутçанталăк уççинче
Вĕсем вĕçрĕç чылайччен.
Умра темĕн ялтăрать,
Пăхсан куç часах шарать.
Çил улать, çил çаврăнать,
Ерипен анма пуçлать.
— Ак сана Кĕленче ту,
Анчах, Алтиер, асту,
Е çухатăн эс пуçна,
Е эс çĕклĕн ху ятна.
Арăмна тупас пулсан,
Эс итле, вăл каласан.
— Сывă пул,— уларĕ çил,—
Хĕн килсессĕн, чĕнсе ил.

Алтиер тăрса юлать.
Малалла мĕн тумалла?
Умра пĕр кермен курать,
Унталла вăл уттарать.
Ак кермен патне çитет,
Хапхине вăйпа тĕртет.
Алăк уçăлма пуçлать,
Тăпси çихĕрсе ярать.
Çавă çихрешӳпеле
(Пĕр пăхсан тĕлĕнмелле)
Çитмĕл те пĕр Хĕн-амак
Тытăнать ташша çапма.
Алтиер çав вăхăтра
Кĕрсе кайрĕ хăвăртрах.
Лешсем юлчĕç ташласа,

Ташласа та хашкаса.
Ак кĕрет вăл кермене:
— Пур-и çын?—тесе чĕнет.
Ун умне пырса тăрать
Курпăн карчăк самантрах.
Шăртламан сӳспе пĕрех
Çӳçĕ пур ун лĕпкере.
Пуçĕ çиййĕнче вара
Шур мăк силленсе тăрать.
— Мĕскер кирлĕ? Мĕн тума
Килтĕн манăн ту çине?—
Пуçлать курпăн кăшкăрма,
Сирпĕтет çеç сурчăкне.—
Пĕр этем те халиччен
Ман пата килсе кĕмен.
— Килтĕм Акăшпи патне.
Вăл ман арăм пулнине
Эс туятăн, пулĕ, тетĕп.
Сан патра вăл, эп пĕлетĕп.
— Ман патра хĕрсем нумай.
Пултаратăп кăтартма.
Арăмна эс палласан,
Хăвăн пурнăçна çăлан.
Арăмна паллаймасан,
Пуçу касăлĕ-çке сан.
— Вилĕм иккĕ килес çук,
Кăтартсам килнĕ пек чух.
Ак, пуçне чĕтрентерсе,
Карчăк ячĕ çихĕрсе.
Акăшсем вĕçсе анаççĕ,
Пикесем пулса тăраççĕ.
Кунта пулĕ виççĕр акăш.
Вăл пăхма пуçларĕ акă:
Пĕр пекех вĕсем сăнран,
Çӳлĕш те вĕсен пĕр тан.
«Палласа илеймĕп-ши,
Пуçăма кастарăп-ши?»
Алтиер шутла пуçлать...

Ак сасартӑк асӑрхать:
Ҫивӗт вӗҫӗ ука пек,
Йӑлтӑрать ҫеҫ хӗвелпе.
— Манӑн арӑм ҫак пулать.
Акӑшпи йӑл-йӑл кулать.
— Лайӑхрах пӑх, тен, вӑл мар?
Пултаратӑн йӑнӑшма.
— Йӑнӑшмастӑп. Акӑшпи,
Ҫуммӑма тӑрсам, эппин!
— Ан васка-ха, Алтиер!
Сыхлаймарӑн эс чипер
Хӑвӑн савнӑ арӑмна,—
Тет ҫиллес курпӑн ӑна.—
Ӗҫ хушатӑп эп сана.
Ӗҫлемешкӗн пултарсан,
Акӑшпи, тен, пулӗ сан.
Хушнине тӑваймасан,
Эп пуҫна касап ыран.
(Вӑл калаҫнӑ хушӑра
Акӑшпи ак хӑлхаран
Калать хӑй упӑшкине:
— Манран ҫеҫ ҫи апатне.)
— Ав, куратни, ту ларать,
Ту ҫинче шур юр выртать.
Ҫавӑ ту, ыран ирччен,
Лартӑр ман картишӗнче,—
Калать карчӑк ахӑрса,
Сӑмсаран вут кӑларса.

Алтиер тухса утать,
Ту айне ҫитсе ларать.
«Мӗнле куҫарас ӑна?»,
Ӑшӗнче вӑл хурланать.
Кӑнтӑр тӗлӗ ҫывхарсан,
Апатпа килет чупса,
Ун патне пӗр яш ача.
— Арӑм аллинчен анчах
Апат ҫинӗ эп ялан.
Вӑл илсе килсе парсан,

Çийĕп эпĕ кăмăлтан,—
Алтиер ăна калать,
Ķаялла хуса ярать.

Вăхăчĕ кăштах иртет,
Арăм апатпа çитет.
Алтиер апат çиет.
Акăшпи ăна вара:
— Халĕ эс,— тет,— çывăрах.
Хуйхи — санăн, ĕçĕ — ман.
Тĕплĕ пулĕ, ан хурлан.
Алтиер вара выртать,
Часах çывăрса каять.
Акăшпи ун кĕсйинчен
Ķĕреçе çивĕччĕшне
Ķăларса илет хуллен,
Çаврăнса кăнтăр енне
Вăл калать хăй сăмахне:
— Çак тăва ыран ирччен
Çав асамăç картишне
Ķуçарсамăр, йăлăнатăп,
Юратушăн эп ыйтатăп.—
Ķĕреçе çивĕччĕшне
Вăл перет те çĕр çине
Çичçĕр çын кĕреçепе,
Хăйсем пурте кĕреш пек,
Акăшпи умне тухаççĕ,
Ту айне чавма пуçлаççĕ.
Самантрах ту çухалать,
Ķартишне кайса ларать.

Алтиер, хĕвел тухсан,
Вăранать те ыйхăран
Шалтах тĕлĕнсе каять:
Ту картишĕнче ларать.
Вăл каять карчăк патне,
Ķĕрет унăн керменне.
— Эп асамăç, çав-çавах

Хамăн картишне тăва
Халиччен куçарайман,—
Курпăн тарăхать чунтан.—
Кăна турăн, пултаран.
Ав, куратăн-и, вăрман
Ыранччен эс кас ăна,
Тат, çурса хур шаршана.
Эс çакна тăвас пулсан,
Акăшпи, тен, пулĕ сан.
Хушнине тăваймасан,
Эп пусна касап ыран.

Алтиер тухса утать,
Вăрман хĕррине ларать.
«Пултарайăп-ши тума?»
Тытăнать вăл хурланма.
Кăнтăр тĕлĕ çывхарсан,
Апатпа килет чупса
Ун патне пĕр яш ача.
— Арăм аллинчен анчах
Апат çинĕ эп ялан,—
Алтиер ăна калать,
Каялла хуса ярать.

Акăшпи часах килет,
Алтиер апат çиет.
Акăшпи ăна вара:
— Халĕ эс,— тет,— çывăрах.
Хуйхи — санăн, ĕçĕ — ман.
Тĕплĕ пулĕ, ан хурлан.
Алтиер вара выртать,
Часах çывăрса каять.
Акăшпи ун кĕсйинчен
Хайхи пуртă çивччĕшне
Кăларса илет хуллен,
Çаврăнса тухăç енне
Вăл калать хăй сăмахне:
— Тухăç çилĕ, йăлăнатăп,

Юратушăн эп ыйтатăп.
Вăйлă тăвăл эс кăлар,
Вăрмана йăлт йăвантар.—
Вара пуртă çивччĕшне
Вăл перет те çĕр çине,
Çавăнтах-çке ушкăнпа
Çынсем тухрĕç пуртăпа:
— Алăсем пит кĕçĕтеççĕ,
Мĕн тума хушатăр?— теççĕ.
— Вăйлă тăвăл вăрмана
Йăвантарĕ пĕр кана.
Вара пурте татăр, çурăр,
Шаршана типтерлĕ хурăр,—
Тет те Акăшпи каять.
Кĕç ак тăвăл хускалать,
Çĕр çулхи юмансене
Вăл кăклать тымарĕпех.
Çатăлти ăвăссене
Ӳкерет кăшт вĕрнипех.
Йывăççем йăлтах йăванчĕç,
Вара тăвăл та тамалчĕ.
Паттăрсем татса çураççĕ,
Пĕр шаршан туса хураççĕ.

Алтиер, хĕвел тухсан,
Вăранать те ыйхăран
Шалтах тĕлĕнсе каять:
Вăрман — çук, шаршан ларать.
Вăл каять карчăк патне,
Кĕрет унăн керменне.
Курпăн тарăхать чунтан:
— Тĕплĕ турăн, пултаран,
Ав, куратăн-и, ыраш
Хумханса ларать уйра.
Ыранччен эс выр ăна,
Çап та сăвăр, армана
Кайса леç те, авăртса,
Кĕлете хур майласа.

Эс çакна тăвас пулсан,
Акăшпи, тен, пулĕ сан,
Хушнине тăваймасан,
Эп пуçна касап ыран.

Алтиер хире тухать
Сар ыраш çине пăхать.
«Пултарайăп-ши тума»,—
Тытăнать вăл хурланма.
Ҫăнтăр тĕлĕ çывхарсан,
Апатпа килет чупса
Ун патне пĕр яш ача.
— Арăм аллинчен анчах
Апат çинĕ эп ялан,—
Алтиер ăна калать,
Ҫаялла хуса ярать.

Акăшпи часах килет.
Алтиер апат çиет.
Акăшпи ăна вара:
— Халĕ эс,— тет,— çывăрах.
Хуйхи — санăн, ĕçĕ — ман.
Тĕплĕ пулĕ, ан хурлан.

Алтиер вара выртать,
Часах çывăрса каять.
Акăшпи ун кĕсйинчен
Систермесĕр, ерипен
Ҫăларать çурла шăлне,
Ҫаврăнса çурçĕр енне
Вăл пуçлать хăй сăмахне:
— Ҫурçĕр çилĕ, йăлăнатăп,
Юратушăн эп ыйтатăп.
Ҫак хирти тырра çапсан,
Пар эс хăвăрт сăварса.
Таврари çиларманьсем
Тăччăр тикĕс ĕçлесе,—
Акăшпи çурла шăлне
Перет акă çĕр çине,

Çавăнтах-çке ушкăнпа
Çынсем тухрĕç çурлапа:
— Алăсем пит кĕçĕтеççĕ,
Мĕн тума хушатăр?—-теççĕ.
— Вырăр, çапăр çак тырра,
Çурçĕр çилĕ сăвăрать.
Таврари çиларманьсем
Тăрĕç тикĕс ĕçлесе.
Авăртса йăлт пĕтерсен,
Хурăр кĕлете кĕртсе,—
Тет те Акăшпи каять.
Акă халăх хускалать,
Ыраша вырма пуçлать.
Вырнă май çапсах пыраççĕ,
Çурçĕр çилĕ сăвăрать-çке.
Таврари çиларманьсен
Çаврăнаç çунаттисем.
Ир енне йăлт пуçтараççĕ,
Çăнăха кĕртсе хураççĕ.

Алтиер, хĕвел тухсан,
Вăранать те ыйхăран
Шалтах тĕлĕнсе пăхать;
Хирте хăмăл çеç ларать.
Курпăн карчăк патнелле
Вăл утма пуçлать хуллен.
Акăшпи хирĕç тухать,
Ак çапла сăмах калать:
— Пур ĕçе эс тунăран
Карчăк кайнă халь халран,
Вĕлерсшĕн вăл сана,
Эс итле эппин мана.
Каçхине вăл витене
Ярĕ лашасем патне.
Унăн лашисем усал,
Кайĕç эс кĕрсен урса.
Тапĕç, çыртĕç, ан хăра,
Эп сана пушă парап.

Эс çунтар пушăпала,
Пур утне çăвархла.
Пĕр кĕсре пур ушкăнра,
Вăл ырхан, аран тăрать.
Пус та эс çав кĕсрене
Ҫăларса ил чĕрине,
Вара кĕр карчăк патне.
Ҫарчăк вуртĕ ахлатса,
Ҫĕç вилес пек хашлатса.
Тилмĕрме пуçлĕ чунтан,
Чĕрене ыйтĕ санран.
Вăл чĕре çак курпăнăн,
Пурнăçĕ унта унăн.
Эс ан пар, вут чĕртсе яр,
Чĕрене вутра çунтар.
Ҫак асамăç вара вилĕ.
Виççĕр хĕр те ирĕк илĕ,
Акăш пулмĕç тек вĕсем,
Пулĕç чи хитре хĕрсем.

Ак хĕвел анса ларать,
Тӳпене уйăх тухать.
— Алтиер!— курпăн чĕнет,—
Ыран тухăн çул çине.
Ҫавăнпа лашасене
Ҫĕрĕпех тăрантмалла,
Апатне сан памалла,—
Хăй ăшра лăх-лăх кулать:
«Пуçу витерех юлать».

Алтиер ак витене
Сĕлĕпе кĕрсессĕнех
Лашасем çыртма пуçлаççĕ,
Кĕçенеççĕ те тапаççĕ.
Алтиер те хăрамасть,
Тытăнать вăл çунтарма
Акăшпи пушипеле.
Утсене вăл йĕвенлет,

Қашнинех ак ҫăвархлать,
Ҫирĕп кăкарса хурать.
Чăн та, ак, пĕр кĕтесре
Чух кăна тăрать кĕсре.
Вăл ăна йăвантарать,
Хăвăртрах пусса хурать.
Қăларать те чĕрине
Уттарать карчăк патне.
Қарчăк ахлатса выртать,
Қĕҫ вилес пек хашлатать.
Алтиер ҫине пăхать,
Йăлăнмашкăн тапратать:
— Вăл кĕсре чĕри кăна.
Эсĕ пар мана ăна.
Ылттăн, кĕмĕл сана парăп,
Қилне ҫитерсех-ҫке ярăп.
Пурăн эс Акăшпипе
Савăнса ҫеҫ, улпут пек.
— Ылттăн, кĕмĕл кирлĕ мар,
Вăл — куҫҫуль те йӳҫĕ тар,—
Алтиер ак вут хурать,
Чĕрене йăлт ҫунтарать.
Мур-асамăҫĕ кăнать,
Қĕленче ту арканать.
Акăшпи Алтиере
Ыталать йĕре-йĕре,
Қу вăл савăнăҫ куҫҫулĕ,
Тертлĕ пулмĕ тек кун-ҫулĕ!
Виҫҫĕр акăш самантрах
Хĕрипраҫ пулса тăрать.
Ыталаҫҫĕ, чуптăваҫҫĕ,
Тав туса пуҫне таяҫҫĕ.
Виҫҫĕр каччă ак килет,
Хĕр чĕри кăлт-кăлт сикет.
— Виҫҫĕр туй тăватпăр,—теҫҫĕ,
Туй курма пире чĕнеҫҫĕ.

* * *

Юмах пĕтрĕ. Чарăнас.
Халăхпа сывпуллашас.
Алтиер те, Акăшпи те
Халь телейлĕ, теççĕ, питĕ.
Эп колхозăн клубĕнче
Вĕсемпе пĕррехинче
Уяв кунĕ хыт ташларăм,
Сăвă-юрă такмакларăм.
Ташши юлчĕ асăнма,
Сăвви пулчĕ вулама.





# Орден

*(Çĕнĕ юмах)*

Асатте ман пит ăстаччĕ,
Яланах юмах яратчĕ.
Çаваǹ чух пĕр юмахне
Çырса илтĕм хут çине.

«Эсир пурсăр та пĕлетĕр:
Тукасра пурнатчĕ Петĕр.
«Қамăн Петĕрĕ»,— тесен,
Қăтартаймăп тĕллесе.

Петĕрсем ялта мĕн чухлĕн?
Вулаканăм хăех чухлĕ.
Ман юмахăм тупсăмне,
Пĕлĕ ун пĕлтерĕшне.

Эп пуçлатăп юмаха,
Салтма парăр уртмаха.

Пурăнатчĕ çавă Петĕр
(Халь эсир ăна пĕлетĕр.)
Аслă ялăн хĕрринче,
Пуç пӳрне пек пĕр-пĕччен.
Хăй ĕçлетчĕ хĕлĕн-çăвĕн,
Анчах эсĕ мĕскер тăвăн:
Унăн нимĕн те пулман,
Пурнăç пулнă çав таран.
Чăннипе калас-тăк: пурччĕ
Тĕмеске пек хура пӳрчĕ.
Выльăх-чĕрлĕх тенине
Кĕртеймен вăл картишне.
Ун чухне мĕнпур ял çынĕ:
«Телее, тен, йытă çинĕ»,—
Тетчĕ ассăн сывласа,
Çаннипе куçне шăлса.
Пирĕн Петĕр тарçăра
Пĕрмаях тар юхтарать.
Автан сассипе выртать,
Автан сассипе тăрать.
Çут хĕвелĕн çутине
Вăл курман, тет, ĕмĕрне.
Ма тесен пуç çĕклеме
Унăн вăхăчĕ пулман,
Виçĕ çыншăн ĕçлеме
Ăна хушнă-çке ялан.

Савнă тусĕ пулнă унăн,
Хĕр пирки ун чунĕ çуннă,
Анчах пĕчĕк туй тума

Петĕр вăхăт тупайман.
«Çаплипех иртет пуль ĕмĕр,
Çаплипех сӳнет пуль ĕмĕт»,—
Шухăшланă хурланса,
Хăйĕн савнине курсан.

Çуркунне çитсен яш-кĕрĕм
Вăйăран епле-ха кĕрĕ?!
Аслă ирĕк урамра
Юрă-кĕвĕ янăрать.

Петĕр çеç ĕçлет канмасăр,
Ушкăнпа вăййа тухмасăр.
Çав-çавах хуçи ăна:
«Ялти чи услап çынна
Ҫил-çуртра тытатăп уссăр,
Тăрантатăп эп пĕр пуссăр»,—
Тесе вĕçĕмсĕр ятлать,
«Çĕтĕкскер»,— тесе кулать.
Тумланма тум çук çав тарçăн.
Тăхăнсассăн çĕн кĕпе,
Ăна касĕ йӳçĕ тар çеç,
Тĕсĕ кайĕ хĕвелпе.
Пуян çын ăна курать-и?
Пуян çын ăна чухлать-и?
Вăл авмасть хăй пилĕкне,
Туймĕ тарçă хурлăхне.

Çу çитсессĕн, вăрмана
Ҫам каймасть-ши çырлана?
Пирĕн Петĕр нихăçан та
Çырлана кайса курман-тăр?
Хуçа хушнă: «Пушă чух,
Вут турттар эс, вутă çук»...

Петĕр ним чĕнмесĕр тӳснĕ,
Чĕринче хаярлăх ӳснĕ.
Паттăрланнă чĕмсĕр чун,

Вěриленнě çамрăк юн.
«Çаплипех иртмест пуль ěмěр,
Çаплипех сӳнмест пуль ěмěт,
Эпě тавăрăп сана»,—
Тенě Петěр хуçана.
Сывпуллашнă тусěпе:
«Кěт. Яла килетěпех.
Хамăр телее тупсассăн,
Пěрле пурнăпăр хавассăн»,—
Алă панă та ăна
Петěр кайнă хулана.

Вăхăчě нумай иртет-и,
Вăхăчě сахал иртет-и,
Пултараймăп калама,
Ăна эпě шутламан.
Юмахра, пěлетěр хăвăр,
Кун-çулсем чупаççě хăвăрт.
Астăватăп: кěркунне
(Манас çук вăл кунсене)
Çěкленет-çке вутлă тăвăл,
Халăх кěтнě вăйлă тăвăл.
Вăл пěтерчě хурлăха.
Ырлăх пачě халăха.
Икě пуçлă ăмăрткайăк
Персе анчě çěр çине,
Қасрěç ун пуçěсене.
Халăх тухрě ирěке,
Туса хучě çěн йěрке.
Чăн телей кěрет киле,
Ун çинчен юрлас килет.
Çут хěвел те тӳперен
Йăл кулса пăхать пире.
Çав кунран пур ěçчен халăх
(Эп мěнех-ши хушса калăп)
Тупрě хăйěн телейне,
Пурнăçларě ěмěтне.
Пирěн Петěр те яла

Таврӑнать хаваспала.
Вӑл иккен таҫта та ҫитнӗ,
Нумай атӑ-пушмак ҫӗтнӗ.
Аслӑ вырӑс пиччӗшпе
Вӑл туслашнӑ пӗр ирпе.
Иккӗш тухнӑ та хастаррӑн,
Ярса тытнӑ пит патваррӑн
Икӗ пуҫлӑ кайӑка,
Час ӑсатнӑ тамӑка.
Ялти халӑх Петӗре
Кӗтсе илнӗ чӗререн.
Чупса тухнӑ чун савнийӗ
(Мӗнле тӳсӗ хӗр чӗрийӗ)
Ыталанӑ мӑйӗнчен,
Чӑп! чуптунӑ питӗнчен.
Халӗ те килӗштерсе
Пурӑнаҫҫӗ, тет, вӗсем.

Ялти халӑх Петӗре
Хисепленӗ чӗререн.
Ма тесен, кӑкри ҫинче
Тӑнӑ орден ялтӑрса,
Ун ҫути инҫе-инҫе
Ҫул кӑтартнӑ ҫутатса.
Яланах-мӗн ҫынсене
Вӑл каланӑ чӑннине.
«Ҳамӑр пурнӑҫа ялта
Ҫӗнӗрен тӑвар йӑлтах.
Халӑх халӗ чӑн хуҫа,
Уншӑн тав ҫак ҫӗн влаҫа»,—
Петӗр кӑмӑллӑн каланӑ,
Ялйышсем ӑна тӑнланӑ.

«Ял ҫерҫисӗр мар»,—тесе
Ахаль мар-мӗн ваттисем
Тепӗр чух хушса хураҫҫӗ,
Пире ырӑ ӑс параҫҫӗ.
Ялти халӑх тӗрлӗ ҫав,

Ăна пĕлме кирлĕ çав.
Çĕнĕ пурнăç тунă чух
Тăшмансен-мĕн канăç çук:
«Кĕç тĕп тăвĕ вăл пире,
Хуйăха мĕнле сирес?
Орден çакнă Петĕре
Вăрттăн, шăппăн пĕтерес»,
Çапла турĕç тет канаш.
Анчах калама канас,
Петĕре хĕрсех сыхлаççĕ,
Ниепле те тытаймаççĕ.
Ма тесессĕн пирĕн Петĕр,
Хăвăрах ĕнтĕ пĕлетĕр,
Пĕрмай халăх хушшинче,
Пит сайра çўрет пĕччен.
Тăшмансем çакна курса
Йăлт каяççĕ-мĕн урса.
Йăпшăнса та пытанса
Тек çўреççĕ сыхласа.

Ваттисем каланă пек
Каласа хурас пулсан:
Курăнмасть куçа инкек,
Йĕрлесех çўрет хыçран.
Пĕр хĕвеллĕ лăпкă кун
Петĕр кўлнĕ лашине
(Килте вутă пĕтнĕ ун),
Тухса кайнă пĕчченех
Хамăр ялăн вăрманне.
Тăшмансем çакна кураççĕ,
Хыçалтан тухса шăваççĕ.
Тур лаша хуллен юртать,
Юртнă май пуçне ухать,
Пĕкки витĕр сар хĕвел
Йăл кулса пăхса пырать.
Хăй юратнă пĕр кĕвве
Петĕр савăнса юрлать.
Петĕр çитрĕ вăрмана,

Вут тиерӗ васкаса,
Ҫав тери ӗҫчен ҫынна
Ӗҫ тӑрать хӑй юратса.
Ҫавӑн пек ун яланах
Пурте пынӑ, тет, ӑнса.
Ак кӗҫех вӑл лашине,
Ҫавӑрать те ял енне,
Уттарма кӑна тӑрать...
Анчах ҫавӑ вӑхӑтра
Тем пырса лекет пуҫран...
Ӳкет Петӗр урараи.
Тӑшмансем ӑна ҫӗклеҫҫӗ,
Хыҫран йӗр ан юлтӑр, теҫҫӗ.
Питӗ тарӑн ҫырмана
Пӑрахаҫҫӗ, тет, ӑна.
Вӑхӑчӗ сахал иртет-и,
Вӑхӑчӗ нумай иртет-и,
Юмахра, пӗлетӗр хӑвӑр,
Йӑлт пулса иртет-ҫке хӑвӑрт.
Инҫетрен е ҫывӑхран,
Халь калаймӑп пӑт татса,
Пирӗн ял ҫынни таҫтан
Килне утнӑ васкаса.
Ҫӗрӗ, чӑн та, тӗттӗм пулнӑ,
Ҫынни темшӗн каҫа юлнӑ.
Вӑрмана пырса кӗрсен,
Вӑл шикленнӗ те кӑштах.
Умра ҫутӑ мӗлтлетсен,
Чунӗ кайнӑ ун лӑштах.
Анчах чимӗр, халиччен
Кунта нимӗн те ҫунман.
Ҫак тӗлтен иртен-ҫӳрен
Ҫутӑ ӗмӗрне курман.
Мӗн ҫунать-ши ҫав тери,
Тен, вут хунӑ пуль юри?
Выртма тухнӑ ачасем
Кӑвайт янӑ пуль чӗртсе?
Ҫын шутлать те тӗлӗнет:

Те чăнах, те тĕлленет,
Сăтăрса пăхать куçне.
Çутă çав-çавах çунать,
Хăй патне туртать çынна.
Утнă чух васкав утса,
Чупнă чух вара чупса,
Çутта хирĕç çын каять,
Çырма хĕррине тухать.
Çын пăхать те тĕлĕнет,
Те чăнах, те тĕлленет,
Тĕпсĕр тарăн çырмара
Çутă ялкăшса тăрать.
Çути кăмăллăн çунать,
Хăй патне туртать чуна.
Тĕпсĕр тарăн çырмана
Çын пĕр шиксĕрех анать.
Вăл пăхать: ун умĕнче
Выртать Петĕр ним пĕлми,
Сарлака кăкри çинче
Çиçет орден пĕр сӳнми.
Тăнлавра ун чĕр суран,
Юн кăшт сăрхăнать унран.
Таса сывлăм шывĕпе
Çын çăвать ун тăнлавне,
Имлĕ-симлĕ çеçкепе
Çын сиплет ун суранне.
Кăшт тăрсан, кăшт тăхтасан,
Петĕр тутлăн карăнать,
Сăнĕ хăйĕн тап-таса,
Куçне кăмăллăн уçать,
Кĕç ура çине тăрать.
Çын ăна кусран пăхать.
Ерипен сăмах пуçлать:
— Малашне асту эс, Петĕр,
Халь хăвах аван сисен-тĕр,
Тек çӳреççĕ йĕрлесе
Сан хыçран мур-тăшмансем.
Ордену пуçна хăтарчĕ...—

Иккĕш те яла уттарчĕҫ.
Пирĕн Петĕр пит сатур,
Унра иксĕлми вăй пур,
Ялти халăхпа пĕрле
Вăл каллех хĕрсе ĕҫлет.
Тăшмансем ăна курсан,
Йăлт каяҫҫĕ, тет, урса.
Йăпшăнса та пытанса
Тытăнаҫҫĕ сыхлама.
Анчах Петĕре тытма
Меллĕ вăхăт тупайман.

Ҫуллахи кунсем ҫитсен,
Сар хĕвел пăхать хĕртсе.
Ăшă ҫумăр пĕрĕхсен,
Хĕрелеҫҫĕ ҫырласем.
Илĕртет ем-ешĕл улăх,
Чечекрен вăл пит те тулăх.
Тырăсем пуҫ кăлараҫҫĕ.
Ҫил вĕрсен, хум чуптараҫҫĕ.
Ĕҫчен ҫыншăн тăван хир
Ĕмĕрех чи ҫывăххи:
Кун пек чух кам килте ларĕ,
Ҫын хире тухса уттарĕ.
Пирĕн Петĕр те паян
Хире тухнă, чăтайман.
Ҫĕкленет-ҫке савăк кăмăл,
Чĕрене ытла та ҫăмăл.
Вăл утать, утать, утать...
Пуҫ кăларнă тырă-пулă
Ăна ăшшăн пуҫ таять.
Петĕр чунĕ савăнать,
Сăнĕнче ун ырă кулă.
Мĕнле хĕпĕртĕ ĕҫчен
Вĕҫсĕр-хĕрсĕр уй-хиртен
Тырпула пухса кĕртсен.
Вăл утать, утать, утать,
Улăха пырса тухать.

Чĕркуççи таран-çке курăк.
Мĕскер кирлĕ ĕнтĕ урăх?
Капан хыççăн капан ларĕ.
Халăха вăл савăнтарĕ.
Чечексем кăшт хумханаççĕ,
Хăйсене татма ыйтаççĕ.
Таçта шăпчăк ши те ши
Шăхăрать те илĕртет:
«Пĕр пуçкăшăль тумăр-ши»,—
Тенĕ евĕр илтĕнет.
Пурнăç вĕресе тăрать
Пĕтĕм аслă таврара.
Çутçанталăк ыр çынна:
«Пурăн!»—тенĕн туйăнать.
Пурăнас килет чăнах!
Анчах мĕн ку? Петĕре
Тăнлавран кистен лекет,
Куçран вут-хĕм сирпĕнет,
Тӳсеймест, ӳкет çĕре.
Тăшмансем-мĕн хыçранах
Утнă сыхласа ăна.
Тăшмансем кавар тăваççĕ,
Васкасах шăтăк алтаççĕ:
«Петĕре витес çĕрпе,
Вăл вара малтанхи пек,
Таврăнаймĕ каялла,
Пăтратаймĕ тек яла».
Шăтăка ăна яраççĕ,
Çерempе витсе хураççĕ.

Вăхăчĕ нумай иртет-и,
Вăхăчĕ сахал иртет-и,
Пултараймăп калама,
Ăна эпĕ шутламан.
Аслă улăх варрине,
Пĕр илемлĕ ирхине,
(Тем ĕçпе, тем çăмăлпа,
Халь калаймăп пăт татса)

Тухнă ăшă кăмăлпа
Пĕр хĕр юрă юрласа.
Чечексем тата-тата
Малалла хуллен утать.
Ак курать: ун умĕнче
Çитĕнет кĕрен чечек.
Қалама та çук илемлĕ,
Шăрши ырă та пит темлĕ.
Халиччен кун пеккине
Вăл курман пуль ĕмĕрне.
Çут хĕвелĕн çутипе
Вăй вылять вăл ахах пек.
Ун çинчен куç илме çук,
Вĕçĕмсĕр пăхас килет.
Çилпеле хумханнă чух
Ăшшăн пуç тайса илет.
Хĕр пăхать те тĕлĕнет:
Çакă улăх варрине
Вăл çӳренĕ-çке ялан,
Кун пек чечеке курман.
Хĕр шутлать: «Тăприпеле
Кăларса илес ăна.
Вара лартăп эп киле
Чи илемлĕ вырăна».
Вăл чавма тăрать çĕре,
Илĕнет хăех çерем.
Вăл пăхать те тĕлĕнет,
Курать Петĕрĕн сăнне:
Сарлака кăкри çинче
Çутă орден йăлтăрать,
Унăн чĕр суранĕнчен
Юн кăшт сăрхăнса тăрать.
Хумханать кĕрен чечек
Вăштăр-вăштăр çил вĕрсен,
Тем каласшăн пулнă пек
Сĕртĕнет хĕре питрен.
Татма шел пек туйăнать,
Хĕр çавах татать ăна.

Чĕр суран çине хурать,
Вара акă мĕн курать:
Юн юхмашкăн чарăнать,
Сăнран кайнă Петĕре
Хĕрлĕ-хĕрлĕ сăн кĕрет,
Суранне те ӳт илет.
Куçне кăмăллăн уçать,
Кĕç ура çине тăрать.
Хĕр ăна куçран пăхать,
Ерипен сăмах пуçлать:
— Хăвна ху асту эс, Петĕр,
Халь хăвах аван сисен-тĕр.
Тăшмансем сана сыхлаççĕ,
Пĕтермешкĕн тăрăшаççĕ,
Çумри ордену кăна
Халь хăтарчĕ вĕт сана,—
Вара иккĕш алла-аллăн
Утрĕç ялалла хаваслăн.

Петĕре ялта курсан,
Халăх савăннă чунтан.
Урăм-сурăм тăшмансем
Йăлт каяççĕ тилĕрсе.
Шухăшлаççĕ, тет, хĕрсе:
«Мĕнлерех çав Петĕре
Халĕ пирĕн пĕтерес.
Ăна вилĕм те тивмест,
Çĕр те хăй айне илмест».
Шухăшлаççĕ, шухăшлаççĕ,
Вара вăрттăн шут тытаççĕ:
«Паттăр Петĕр орденне
Татмалла та илмелле.
Çав çăлать пуль ун чунне.
Ăна пирĕн пĕлмелле.
Вара йĕксĕк Петĕре
Вăрттăн, шăппăн пĕтерер».
Тилĕ евĕр йăпшăнса,
Йăпшăнса та пытанса
Сыхлама вĕсем пуçлаççĕ,

Кунĕн-çĕрĕн тек куçлаççĕ.
Чунĕсем темле тӳсеççĕ,
Аллисем ытла кĕçтеççĕ.
Петĕре ярса тытсан,
Терт кăтартĕç савăнса.
Анчах паттăра тытма
Меллĕ вăхăт тупăнмасть.
Çавăнпах пуль тăшмансен
Чăтăмĕ пырать пĕтсе.
Ак пĕр тĕттĕм каçхине
Петĕре вĕсем тытаççĕ,
Унăн çутă орденне
Илме хăвăрт кармашаççĕ,
Анчах çакă самантра
Петĕр акă мĕн курать:
Тăшмансен выç аллисем
Хăрăк турат пек хăраççĕ,
Ухват евĕр урисем
Тăлланса кăна лараççĕ.

Çакăн хыççăнах ялта
Пурнăç улшăнчĕ йăлтах.
Тĕрлĕрен тăшмансене
Ятăмăр леш тĕнчене.
Халĕ колхозра пурнатпăр,
Ырлăхпа телей куратпăр.
Пирĕн паттăр çынсене
Пĕтереймĕç ĕмĕрне!—
Çакăн пек пĕтет юмахăм,
Çирĕп манăн чăн сăмахăм».

Асатте ман пит ăстаччĕ,
Яланах юмах яратчĕ.
Эпĕ ун пĕр юмахне
Çырса илтĕм хут çине.
Ваттине хисеплесе,
Çырнине шута илсе,
Юмаха, туссемĕр, вулăр.
Хăвăр пит телейлĕ пулăр.

## ТУПМАЛЛИ


| | |
|---|---|
| Тимĕрпе ылттăн . . . . . . | 3 |
| Куçлă çĕрĕ . . . . . . . . | 9 |
| Пăрça . . . . . . . . . | 30 |
| Акăшпи . . . . . . . . . | 35 |
| Орден . . . . . . . . . | 67 |



ГЕОРГИЙ АНДРЕЕВИЧ ЕФИМОВ

ЛЕБЕДУШКА

(Сказки)

На чувашском языке

Художественное оформление **А. П. Гольцева**

Редактор **А. Галкин.** Технич. редактор **Н. Степанов.**
Худож. редактор **Н. Кириллов.** Корректор **В. Бурнаевский.**

НТ 00253. Сдано в набор 12/VIII-1960 г. Подписано к печати 22/IX-1960 г.
Формат 60×92/16. Объем 5,0 печ. л. Уч. изд. 4,23. Заказ № 1172. Тираж 3000 экз.
Изд. № 148. Цена 1 р. 50 коп., с 1 янв. 1961 г. цена 15 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
**г. Чебоксары, Володарского, 5.**